ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 1 ЭРНЕКУН № 23 (8675)

Хакĕ 20 пус. 34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

И. Сталин юлташ Магнитогорскри металлурги комбиначĕнче ĕçлекен рабочисене, работницăсене, инженерсене, техниксене тата служащисене саламлани (1 стр.).

Республикăри ĕçсыннисем СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарни çинчен пĕлтерние пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç (2 стр.).

Халăх демократи çĕршывĕсенче (1 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Г. Николаев.—Канаш хулинчи парти активĕн пухăвĕ (2 стр.).

А. Котлеев.—Шкулти комсомолпа пионер организацийĕ (2 стр.).

А. Александров.—Вăйлă тырпулшăн пуçарнă кĕрешÿ (3 стр.).

И. Жадецкий.—Ĕçсыннисен ыйтăвĕсем çине тимлĕ пăхмалла (3 стр.).

КИНО. М. Юрьев.—«Ялти врач» (3 стр.).

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ. В. Долгов. —«Пирĕн юрă» (3 стр.).

Маршал Чойбалсан ÿтне Мускав юлашки çула ăсатни (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Çуракине хатĕрленес ĕçе вырăнти Советсен большевикла ертсе пымалла

Социализмлă ялхуçалăхĕ пысăк хăвăртлăхсемпе малалла аталанса пырать. Колхозсем хăватлă та паха техникăпа, совет наукин çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе усă курса çулсерен тырпул тухăçлăхне хăпартса пыраççĕ, организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла хăвăрт тĕреклетеççĕ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи государство планне тултарни çинчен СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çулта социализмлă ялхуçалăхĕ çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. 1951 çулта 7 миллиард та 400 миллион пăт тĕштырă туса илнĕ, Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕ те чылай ÿснĕ.

Ялхуçалăхĕн техникăллă никĕсĕ ÿссе çирĕпленет. Иртнĕ çулта ялхуçалăхĕ, 15 лаша вăйлă трактор çине куçарса шутласан, 137 пин трактор, 53 пин комбайн, 59 пин грузовой автомобиль, ытти ялхуçалăх машинисем 2 миллион илчĕ. Ялхуçалăхне механизацилени пĕрлех ăна электрификацилес тĕлĕшпе те пысăк çитĕнÿсем тунă. Сутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла аслă план пурнăçа кĕрсе пырать.

Çавăн пекех пирĕн республика ялхуçалăхĕ те иртнĕ çулта пысăк çитĕнÿсем турĕ. Республикăри колхозсем вăйлă тырпул туса илчĕç, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне чылай хăпартрĕç.

Совет государстви республикăри МТС-сене, колхозсене хăватлă тракторсем, комбайнсем тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай парать. Вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене татах та ытларах механизацилеме, çĕрĕç культурине лайăхлатса пыма май пачĕç.

Большевиксен партийĕ, Совет правительстви пирĕн республика ялхуçалăхĕ умне пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратрĕç: колхозсен тĕштырăпа техникăллă культурăсен тухăçлăхне, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне чылай ÿстермелле.

Большевиксен партийĕ, аслă Сталин куллен пулăшнипе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем умĕнче тăракан задачăсене чыслă пурнăçлассишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Халĕ вăхăтра çуракине большевикла кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Çурак—ялхуçалăх ĕçĕн ответлă тапхăрĕ. Ăна ăнăçлă ирттернинчен вăйлă тырпул туса илесси, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне хăпартасси килет.

Партипе правительство социализмлă ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсене татса парас, çуракине хатĕрленес ĕçре выранти Советсен пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Вĕсем колхозсене, МТС-сене, ялхуçалăх органĕсене оперативно ĕçлеме пулăшма, ялхуçалăхне ертсе пырассине тĕтĕш вăйлатса пыма тивĕç.

Республикăри нумай колхозсем çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Муркаш районĕнчи Энгельс ячĕпе тăракан, Вăрмар районĕнчи Тикеш ял Советне кĕрекен «Большевик», Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Мишеркасси ял Советне кĕрекен Маленков ячĕпе тăракан колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕçсем пысăк хăвăртлăхпа пулса пыраççĕ. Етĕрне районĕнчи Стрелецки ял Совечĕ уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартать. Çуракине тĕплĕ хатĕрленсе кĕтсе илес шутпа ку ыйтăва исполком ларăвĕнче атарласа сÿтсе явнă. Пĕлтĕрхи çитменлĕхсене шута илсе вĕсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Ял Совечĕ депутатсемпе, активпа, мĕнпур колхозниксемпе тачă çыхăнса ĕçлет, колхозри ĕçсене ялан тĕрĕслесе тăрать. Çуракине хатĕрленес ĕçе ялăнчи ялхуçалăх комиссийĕ активлă хутшăнать. Комисси членĕсем вăрлăха мĕнле сыхласа усранине, ялхуçалăх машинисене юсас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тухнă, ĕç выльăхĕсене çуракине хатĕрлеме паха сĕнÿсем панă.

Стрелецки ял Совечĕ решенисем йышăннипе çеç лăпланмасть, вĕсене çине тăрса пурнăçлассишĕн кĕрешет, пур ĕçсене те оперативно ертсе пырать. Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çуракине хатĕрленесе пысăк ĕçсем турĕç: ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерчĕ, вăрлăхсене сортласа тасатнă, чылай колхозниксем агрозоотехника курсĕсенче вĕренсе хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстереççĕ.

Республикăри чылай районсенче çуракине çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ районĕсенче ялхуçалăх машинисене ерипен юсаççĕ Çакă вăл Советсем хăйсен ĕçĕсене çителĕксĕр туса пынинчен те килет. Çуракине хатĕрленес ыйтупа чылай ял Совечĕсем сахал интересленеççĕ, палăрнă çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Хăшпĕр колхозсем вăрлăх фончĕсем çителĕклĕ хывса çитермен, удобренисем хатĕрлессине кирлĕ пек йĕркелемен. Уйрăм район Совет исполкомĕсен ялхуçалăх пайĕсем хăйсен агротехникăллă ĕçсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслемеççĕ, ку енĕпе колхозсене çителĕксĕр пулăшаççĕ.

Шупашкар районĕнчи Заводски ял Советне 4 колхоз кĕрет Вĕсенчен «Красный флот» колхоз çуракине лайăх хатĕрленет: сортлă вăрлăхсен фондне çителĕклĕ хывнă, машинăсене юсаса çитернĕ Анчах та ял Советне кĕрекен ытти колхозсем çуракине япăх хатĕрленеççĕ. Ял Совечĕ колхозсенчен сводкăсем пухнипе çеç çырлахать. Ялăнчи ялхуçалăх комиссийĕ хут çинче кăна шутланать, унăн членĕсем канашлăвĕсем пулмаççĕ Ял Совечĕ «Красный флот» колхозăн паха опытне сармасть Район Совет исполкомĕ ял Совечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе сахал ĕçлет.

Вырăнти Совет исполкомĕсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе палăртнă мероприятисене колхозсем, МТС-сем мĕнле пурнăçланине куллен тĕрĕслесе тăмалла, çитменлĕхсене шута илсе çеç кăлласа пармалла мар, вĕсене сийĕнчех пĕтерсе пымалла.

Суркурпеки уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă ирттерес тесен, колхоз производствинчи ответлă участоксене ĕçе тĕплĕ пĕлекен çынсене уйăрса лартмалла колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне лайăх йĕркелемелле, кашни ялхуçалăх артель членне, МТС работникне социализмлă ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене ăнлантарса парас пулать. Райсовет исполкомĕсен ялхуçалăх пайĕсен ĕçне лайăхлатмалла, вĕсен специалисчĕсене колхозсем умĕнче тăракан задачăсене татса пама мобилизацилемелле.

Вырăнти Советсен механизаторсен кадрĕсем вĕрентсе хатĕрлеме панă плана тултарассишĕн, вĕсе çуллăх агротехника курсĕсен ĕçне куллен вăйлатса пырассишĕн кĕрешмелле.

Халĕхи вăхăтра колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пыраççĕ, çулталикри производство планĕсем. МТС-семпе договорсем тума хатĕрленеççĕ. Пухусенче колхозниксем паха сĕнÿсем пыраççĕ. Вĕсем машинăсемпе ĕçлессине лайăхлатма, ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курма хушаççĕ. Вырăнти Советсен тивĕçĕ колхозсене МТС-сен техникине, наукăн çитĕнĕвĕсемпе, ялхуçалăх производствинчи малта пыракансен опычĕпе усă курассине, ĕç организацине йĕркелесси пулать Çак ыйтусем производство планĕнче тĕп вырăн йышăнмалла Производство планне колхозниксен пухăвĕнче çирĕплетнĕ хыççăн бригадăсемпе фермăсене производство заданийĕсем парасси çине тимлĕ пăхмалла. МТС-семпе колхозсем тăвакан договорсене вăхăтра пăхса тухса çирĕплетмелле.

Вырăнти Советсен организациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатса, колхозниксемпе механизаторсен социализмлă ăмăртăвне сарса, колхозсене çуракине пур енчен те лайăх хатĕрлесе çитме пулăшмалла.

Вăйлă тырпулшăн тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерессишĕн сарăлса пыракан кĕрешĕве большевикла ертсе пырасси, партипе правительство республика ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсене ăнăçлă татса пама мĕнпур ял ĕçченĕсене мобилизацилесси—вырăнти Советсен чыслă та ответлă ĕçĕ.

Корреспондентсен районти канашлăвĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Нумаях та пулмасть ялкорсемпе стена хаçат редакторĕсен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Т Соколов юлташ ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе вырăнти пичетпе корреспондентсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен доклад турĕ. Канашлура 80 çын пулчĕ. Пренире 13 çын тухса каларĕ.

Докладчик тата тухса калакансем районти «Ударник» хаçат ĕçне лайăхлатма колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракансен, вăйлă тырпул мастерĕсен опытне анлă сутатса пыма сĕнчĕç.

Канашлу вăхăтĕнче стена хаçачĕн выставкине организациленĕ. Выставкăра пурĕ 20 хаçат пулнă.

П. ГЕРАСИМОВ.

Магнитогорск хули
Магнитогорскри металлурги комбиначĕ

Комбинат директорне БОРИСОВ юлташа
Комбинатăн главнăй инженерне ВОРОНОВ юлташа
ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн парторгне СВЕТЛОВ юлташа
Завком председательне ПЛИСКАНОС юлташа
ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн комсоргне ПАНКОВ юлташа

Магнитогорскри металлурги комбиначĕнче тата «Магнитострой» трестра ĕçлекен рабочисене, работницăсене, инженерсене, техниксене тата служащисене комбината — çĕршывăн хăватлă металлурги никĕсне ĕçе янăранпа çирĕм çул тултарнă ятпа салам ярса ырă сунатăп.

Магнитогорецсем, пирĕн Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсем пулса, комбинатăн хăватлă производствине тăвас тĕлĕшпе мĕнпур çулсем хушши тÿрĕ кăмăлпа тата паттăррăн тăрăшса ĕçлерĕç, çĕнĕ техникăпа ĕçлеме ăнăçлă вĕренсе пычĕç, металл кăларас ĕçе пĕрмай ÿстерсе пычĕç тата Партипе Правительство хамăр çĕршыв валли металл çителĕклĕ парас тĕлĕшпе лартнă задачăсене чыслăн пурнăçласа пычĕç.

Сире, юлташсем, хăвăр ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума пĕтĕм чĕререн ырă сунатăп.

И. СТАЛИН.

Мускаври метрон çĕнĕ линийĕ ĕçе кĕнĕ

Мускаври метрон Большое кольцо текен линийĕн çĕнĕ участокĕнче тăватă станци халăхсене уçнă. Ку вăл—метро тăвакансен нумай пин çынлă коллективĕн хавхаллă ĕçĕ, стахановецсен ĕçĕ.

Çĕнĕ çул [illegible] январĕн 30-мĕшĕнче «Комсомольская-кольцевая» станцин тĕп залĕнче митинг пулнă. Митинга метро тăвакансем, çĕр айĕнчи дворецсене тунă çынсем—пĕтĕмпе 3 пин çын яхăн пухăннă. Çĕнĕ линие ĕçе янă çĕре общественноç [illegible] представителĕсем пухăннă.

Станци тĕп залĕнче—И. В. Сталин юлташăн пысăк портречĕ тата плакатсем. Хĕрлĕ тăвансем çине «Ленин ялавĕ айĕпе, Сталин ертсе пынипе—малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!», «Тĕнчери чи лайăх метрополитена тăвакансене, метрострой стахановецĕсене салам!», тесе çырса тăхнă.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн членĕ, Мускав комитечĕн секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ, Моссовет исполкомĕн председателĕ М. А. Яснов юлташ, ВКП(б) Мускав хула комитечĕн секретарĕ И. И. Румянцев юлташ, Сул-йĕр министрĕ Б. П. Бещев юлташ, Мускаври метрострой начальникĕ И. А. Губанков юлташ тата ытти юлташсем те митинг президиумне суйланине [illegible] кĕтсе илнĕ.

Митинга пухăннисем нумайччен тăвăллă алă çупса хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн И. В. Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюрона суйланă.

Мускаври метрострой начальникне Губанков юлташа сăмах панă. Вăл ĕç [illegible] çинчен каласа кăтартнă, лайăх ĕçлекен участоксен, бригадăсен, стахановецсен ячĕсене, çĕнĕ линие тунă çĕрте уйрăмах палăрнă çынсем çинчен каланă. Строительсен ячĕпе вăл метростроевецсен коллективĕ, большевиксен партийĕн, Совет правительствин тата И. В. Сталин юлташăн заданине пурнăçласа, метрон Большое кольцо текен линийĕн иккĕмĕш участокне срокчен туса пĕтерессишĕн кĕрешни çинчен пĕлтернĕ.

Унтан митинга «Новослободская» станцине тăвакан строительсен представителĕ Лукьянов юлташ, «Белорусская-кольцевая» станцине тунă çĕрте ĕçлекенсен бригадирĕ Тимошин юлташ, «Комсомольская-кольцевая» станци строительствин начальникĕ Шмид юлташ сăмах тухса каланă.

Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан метрополитен начальникĕ А. П. Ежов юлташ сăмах каланă. Вăл метрополитен коллективĕ, строительсенчен çĕнĕ линие йышăнса, пассажирсене турттарса çÿрес ĕçе пахалăх тата лайăхлатма, çав ĕçе тата культурăллăрах туса пыма тăрăшасси çинчен каланă. Вăл çĕнĕ линие тăвакансене тав тунă.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн членĕ Мускав комитечĕн секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ тăвăллă сăмахĕпе строительсене Мускав çыннисем валли лайăх парне хатĕрлесе панăшăн тав тунă тата метростроевецсене малашнехи ĕçре çитĕнÿсем туса пыма ырă суннă.

Пухăннисем тăвăллă алă çупнипе [illegible] И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă.

Станцисене Совет Союзĕн Геройĕн хăватлă çара чаплă ятсем парать. Совет [illegible] Мускав çыннисен [illegible] лайăхлатассишĕн [illegible] И. В. Сталин юлташа чыслаччĕ салам [illegible], тăвăллă алă çупни илтĕнет.

Митинг хупăннă.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Мускав комитечĕн секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ, Мускав Совечĕ исполкомĕн председателĕ М. А. Яснов юлташ, ВКП(б) Мускав хула комитечĕн секретарĕ И. И. Румянцев юлташ, Сул-йĕр министрĕ Б. П. Бещев юлташ, Мускаври метрострой начальникĕ И. А. Губанков юлташ тата ыттисем те поезд патне пырассĕ. Л. М. Каганович ячĕпе тăракан метрополитенăн начальникĕ Ежов юлташ поезд уйăрчи лентăна татать. Митинга пухăннисем поезд çине ларассĕ.

15 сехетре çĕнĕ çул çинче поездсем йĕркелле çÿреме пуçласшĕ.

Малтанхи поезда «Ботанически сад», «Новослободская» тата «Белорусская-кольцевая» станцийĕсене Мускаври пионер çыннисем хавасланса кĕтсе илесçĕ. Вĕсем тĕнчери чи лайăх метрона, сталинла самана чи чаплă сооруженийĕсенчен пĕрне—Мускаври метрона тăвакансене хĕрÿллĕ алă çупса саламлаççĕ. (ТАСС).

Коммунизмăн аслă стройкисенче

Çĕнĕ тинĕс

ДОН ÇИНЧИ РОСТОВ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС) Цимлянски тинĕсĕ пулмалли вырăна шыв тулать Шыв ĕлĕк станицăсемпе хуторсем ларнă айлăмсем патне çывхарнă. Цимлянская станица районĕнче шыв икĕ эрне хушшинче 365 сантиметр хăпарнă. Аялаларахра, плотина патĕнче шыв 374 сантиметр хăпарнă.

Çĕнĕ тинĕс тĕнчери шыв тăма ятарласа тунă чи пысăк вырăнсенчен пĕри, шыв нумай тăракан вырăн пулать. Унта пĕтĕмпе 24 миллиард кубометр шыв тăмалла.

Тинĕс пулмалли вырăнта пурăннă çынсене тата çав вырăнти çуртсене пĕтĕмпех çĕнĕ вырăна куçарнă, ку ĕçе ăнăçлă пурнăçланă, çĕнĕрен тунă ялсене илемлетнĕ, электричество кĕртнĕ.

Цимлянскинчи гидроузел строительствине кашни кунах Мускавран, Харьковран, Одессăран, Краснодартан, Ростовран тата ытти хуласенчен çĕршер шоферсем автомашинăсемпе пыраççĕ. Çĕршыв вĕсене шыв айне пулмалли вырăнсенчен йывăçсене турттарса кăларнă çĕрте тата шыв тăмалли вырăна пĕтĕмпех тасатнă çĕрте ĕçлеме, çав ĕçсене вĕçне срокрах туса пĕтерме ярать.

В. И. Ленин Сочиненийĕсен XVI-мĕш томĕ казахла пичетленсе тухнă

АЛМА-АТА. (ТАСС). Казах ССР Государство издательстви В. И. Ленин Сочиненийĕсен XVI-мĕш томне казахла пичетлесе кăларнă.

Ăна вырăсларан казах чĕлхи çине ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Маркс—Энгельс—Ленин Институчĕн Казах республикинчи филиалĕ куçарса хатĕрленĕ.

Колхозри отчетпа суйлав пухăвĕ

ЕТĔРНЕ. Çак кунсенче Мичурин ячĕпе тăракан колхозра отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху правлени председателĕ С. Токарев юлташ тунă отчета сÿтсе явнă.

Колхоз, 1950 çулхипе танлаштарсан, иртнĕ çулта тырпул тухăçлăхне чылай ÿстернĕ. Çакă государствăна август уйăхĕнчех тырă парса татма, вăрлăх фончĕ тата ялхуçалăх артелĕн Уставĕнче кăтартнă ытти фондсене кирлĕ чухлĕ уйăрма, ĕçкунĕсем тăрăх ытларах тырă валеçме май панă. Артель государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене срокчен пурнăçланă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те ăнăçлă ĕçленĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă. Хурт-хăмăр йышне 200 семьене çитернĕ. 160 пуç вырнаçмалăх типовăй сысна вити тунă, выльăх апачĕ кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ.

Укçа-тенкĕ тупăшĕ çулсеренех ÿсет. Производствăллă плана пăхнинчен чылай ытларах тупăш илнĕ. Артелĕн уйрăлми фончĕ пысăкланнă.

Колхозниксем правлени отчетне тĕплĕ сÿтсе яврĕç. Вĕсем колхоз правленийĕ тырпул тухăçлăхне хăпартас, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес ĕçре мĕнпур майсемпе çителĕклĕ тараш усă курманнине, ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсакансемпе çителĕксĕр кĕрешнине кăтартса пачĕç.

— Пирĕн нумай колхозниксем ĕçре ялавах хастарлă,—тет Е. Зворнов колхозник.—Çавна пула эпир тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе хăшпĕр çитĕнÿсем турăмăр. Çĕрĕç культурине ÿстерес, малта пыракансен пуян опычĕпе анлă усă курса ĕçлесен пулсан, татах та тухăçлăрах тырпул туса илнĕ пулăттăмăр. Пирĕн хăшпĕр уйсем ялтан инçе. Унта тислĕк кăларас пулсан, ăна темиçе çырма урлă турттарас пулать. Çав уйсене юнашарах, вăрман пунктĕнче, чылай çулсем хушши пухăннă темиçе пин лаша ăкăн тислĕк усăсăр выртать. Çав тислĕкпе усă курмастпăр. Тырпул тухăçлăхне ÿстерме çĕнĕрен те çĕнĕ майсем шыраса тупмалла.

М. Некрасов юлташ колхоз правленийĕ выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени çинчен каларĕ. Сĕт-çу тухăçлăхĕ те пысăк мар. Колхозăн пахча çимĕçсем туса илме лайăх майсем пур. Анчах правлени çак ĕçе ертсе пыман Колхозниксем колхоз правленине çавăн пекех çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн хытă критикăларĕç.

— Колхоз правленин ял культурине хăпартас, колхозниксен культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе те тимлесе ĕçлемелле,—тет пуçламăш парторганизаци секретарĕ В. Соловьев юлташ.—Культура учрежденийĕсене тивĕçтерме пăхнă фондран 42 тенкĕ кăна усă курни—колхоз правленийĕ çав ыйтусемпе интересленменни çинченех калать. Колхоз клубĕн библиотекинче кĕнекесем сахал, тĕрлĕрен вăйă, музыка инструменчĕсем çук.

Тухса калакансем чылайăшĕ МТС колхоза япăх пулăшнине, договора пурнăçламаннине, колхоз правленине колхозниксен сĕнĕвĕсене шута илменнине кăтартса пачĕç. Райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕ те колхоза сахал пулăшать. Агрономсемпе ветеринари работникĕсем сайра-хутра кăна пулаççĕ, вăхăтра кирлĕ пулăшу парса тăни çук. МТС-па ялхуçалăх пайĕ хăйсен представителĕсене отчетпа суйлав пухăвне яман.

Пуху колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетес, тырпул тухăçлăхне, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлеме сĕнÿсем парса хăварчĕ. Колхоз председателĕ пулма каллех С. Токарев юлташа суйларĕç.

Н. ЦВЕТКОВ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

★

В. И. Ленинпа И. В. Сталин произведенийĕсене поляк чĕлхипе нумай пичетлесе кăлараççĕ

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕсен В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн произведенийĕсем Польша республикинче нумай саралнă.

Поляк чĕлхипе В. И. Ленин Сочиненийĕсен 10 томне пичетлесе кăларнă, кăçал тата тепĕр 8 том пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ. В. И. Ленинăн уйрăм произведенийĕсем пысăк тиражпа пичетленсе тухаççĕ.

И. В. Сталин юлташăн произведенийĕсене пурне те пекех пичетлесе кăларнă.

И. В. Сталин Сочиненийĕсен 13 томне поляк чĕлхи çине куçарнă. И. В. Сталинăн «Ленинизм ыйтăвĕсем» ятлă кĕнекине пилĕк хутчен пичетлесе кăларнă.

Марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене Польшăри пĕрлештернĕ рабочи партин «Ксенжка и Ведза» («Кĕнеке тата пĕлÿ») текен издательстви пичетлесе кăларать. (ТАСС).

СССР Союзĕн çитĕнĕвĕ—халăхсен мирпе хăрушсăрлăхĕн çирĕп тĕрекĕ

БУДАПЕШТ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Венгрири хаçатсем СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарни çинчен ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Статистика Управленийĕ пĕлтернине пĕтĕмпех пичетлесе кăларнă.

«Мадьяр немзет» хаçат тĕнчери лару-тăру çинчен çырнă обзорта: асăннă пĕлтерÿ «Совет Союзĕ мирлĕ строительствăра питĕ пысăк çитĕнÿсем тунине çĕнĕрен уçăмлăн кăтартса парать», тесе çырать.

«Сабад неп» хаçат ку пĕлтерÿ пирки «Коммунизм тăвакан совет халăхĕн аслă çĕнтерĕвĕ» ятлă умстатья пичетленĕ.

Совет Союзĕн индустриллĕ хăвачĕ халĕхи вăхăтра кирек хăçанхинчен те пысăк,—тесе çырать «Сабад неп» хаçат.—Çав хăватлă индустрие тунă миллионшар совет çыннисен ĕçри чаплă çитĕнĕвĕ вăл пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес тĕлĕшпе тунă питĕ паха ĕç пулса тăрать. Совет Союзĕ—Сталин çĕршывĕ, коммунизм тăвакан çĕршыв—пĕтĕм тĕнчери мирĕн тата халăхсен хăрушсăрлăхĕн чи çирĕп тĕрекĕ.

Совет Союзĕн çитĕнĕвĕсем тĕнчери мĕнпур халăхсене çĕнтерÿ тума шанăç параççĕ тата хавхалантараççĕ,—тет малалла хаçат—Уйрăмах вĕсем халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсынни массисене тăрăшса ĕçлеме хавхалантараççĕ, вĕсем, совет халăхĕн хальхи чаплă пурнăçне курса, хăйсен малашнехи пурнăçĕ лайăх пуласси не ĕненсе тăраççĕ.

Румыни халăхĕ партипе правительство укçа реформи ирттернине тата таварсен хакне йÿнетнине ырлать

БУХАРЕСТ. Румыни Министрĕсен Совечĕ тата Румынири рабочи партин Центральнăй комитечĕ укçа реформи ирттересси тата тавар хакĕсене йÿнетесси çинчен постановлени йышăннă. Çав ятпа Румынири промышленность предприятийĕсенче, учрежденисенче, ялсенче тата машина-трактор станцийĕсенче пухусемпе митингсем пулса иртеççĕ. Пухусемпе митингсенче ĕçсыннисем партипе правительство постановленине ырлаççĕ.

Çĕршыври нефть промышленносĕн центрĕнче—Плоешти хулинче пысăк митинг пулнă. Унта темиçе пин çын пуханнă. Митинг питĕ чаплă иртнĕ.

Бухарестри «Республика» текен трубопрокатнăй заводра ĕçлекенсен коллективĕн митингĕнче Е. Рыпя инженер сăмах тухса каланă Вăл укçа реформи ирттернĕ май тата таварсен хакĕсене йÿнетнипе Румынири ĕç халăхĕ питĕ пысăк усă илнине палăртнă.

Решицăри «Совромета֊» металлурги комбиначĕнче митинг политикăллă пысăк çĕкленÿпе иртнĕ. Стахановецсем тата производствăра малта пыракансем Петру Ревуйке. Николае Якоб, Илие Иванович тата ыттисем те хĕрÿллĕ сăмахсем тухса каланă Вĕсем партипе правительствăна ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн пĕрмаях тăрăшнăшăн пĕтĕм чун-чĕререн тав тунă

Кивĕ укçана çĕннине улăштарасси Бухарестра пур çĕрте те лайăх пулса иртет.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Канаш хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Çак кунсенче Канаш хулинчи парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху «Хулари промышленноçпа транспорт предприятийĕсен 1951 çулхи ĕçĕсем тата 1952 çулхи задачисем çинчен» ВКП(б) хула комитет секретарĕн И. Новиков юлташăн докладне итлесе сӳтсе яврĕ.

— ВКП(б) обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçласа,—терĕ докладчик,—хулари предприятисем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Хулари предприятисем продукци туса кăлармалли 1951 çулхи плана пĕтĕмĕшпе 105,3 процент тултарнă. 1951 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 18 предприятирен 9 предприяти плана тултарса пырайман пулсан, 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне çавăн пек предприятисем пурĕ виççĕ юлнă. Хусан чугун çул управленине пăхăнса тăракан организацисем хушшинчи социализмлă ăмăртура V-мĕш дистанци коллективĕ тăтăш пĕрремĕш вырăн йышăннă. 1951 çулхи IV-мĕш кварталти итогсем тăрăх Хусан чугун çул управленийĕпе допрофсож пăравус депоне хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Докладчик, çавăн пекех пренире тухса калаканисем, ВКП(б) хула комитечĕн предприятисене ертсе пырас ĕçре чылай пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Канаш станцийĕ иплашки вăхăтра хăйĕн ĕçне вайсăрлатнă. Вăл III-мĕшпе IV-мĕш кварталсенче 4 брак тунă. Канаш станцийĕ юлса пынипе СССР Министрĕсен Совечĕ 1951 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче йышăннă постановленипе те палăртнă. Арман комбиначĕ, горгоп, хулари электростанци продукци туса кăлармалли çулталăкри плана, тумтир çĕлекен индпошив мастерскойĕ—ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана тултарман.

Уйрăмах вагонсем юсакан заводри пысăк çитменлĕхсене хытă критикăларĕç. Завод пĕр тикĕс ĕçлеместь. Вăл кашни уйăхра теҫĕ пек юлашки вунăкунлăхра 50—60 процент вагон юсаса кăларать. Штурмовщина кунта йăлана кĕнĕ. Çакă вăл производствăна тĕрĕс планласа ертсе пымаппинчен, цехсене техникăлла пулăшу çителĕксĕр панинчен килет. Техникăлла пайăн начальникĕ Гомолицкий юлташ технологи процесне çĕнетсе лайăхлатассишĕн, технологи дисциплинине çирĕплетессишĕн çителĕксĕр кĕрешет. Производство пайĕн начальникĕ Соколовский юлташ, производствăна тĕрĕс планлас тата ертсе пырас вырăнне, ĕçри çитменлĕхсене палăртса çеç ларать. Вăл паянхи ĕçсемпе çеç пурăнать, малашлăхпа интересленмест.

Цехсенче пысăк çитменлĕхсем пур. Рабочисене тухăçлă ĕçлеме лайăх майсем туса памаççĕ, чылай рабочисем хăшпĕр чухне ĕçсĕр лараççĕ, тепĕр чухне вĕсене сверхурочно ĕçлеттереççĕ. Малта пыракансен опытне сарас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Социализмлă ăмăртăва йĕркелесе ертсе пырас ĕçре формализм нумай.

Заводра перекетлĕх режимне çирĕплетессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн тимлĕ кĕрешмеççĕ. 1951 çулта нормăран иртересе 9.573 кубометр хăма пĕтерпĕ. Вагонсене пысăк пахалăхпа юсамаççĕ. Тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕкки. Чылай рабочисем ĕç нормине тултармаççĕ. Завод ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 95,7 процент çеç тултарнă. Пĕлтĕр завод планпа палăртнинчен 395 вагон сахалтарах юсанă.

Пренире тухса калакансем хулара строительство ĕçĕсем юлса пынине палăртрĕç. Уйрăмах вагонсем юсакан заводăн капитальнăй ĕçсем тăвакан пай (ОКС) тата Росмаслостройăн строительствăпа монтаж кантурĕ япăх ĕçлеççĕ.

Актив пухăвĕ промышленноçпа транспорт предприятийĕсем енĕпе 1952 çулхи плана тултарма пулăшакан решени йышăнчĕ.

Г. НИКОЛАЕВ.

Райком лекциллĕ пропагандăна хакламасть

Ĕçсыннисене коммунистла воспитани парас тата кадрсене марксистла-ленинла теорие вĕренме пулăшас ĕçре лекциллĕ пропаганда пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ăна районта парти райкомĕ йĕркелесе пыма тивĕç. Унăн хăйĕн лекторĕсемпе докладчикĕсен ушкăнĕсене кăна мар, лекциллĕ пропаганда енĕпе ĕçлекен ытти организацисене те кӳлсе ертсе пымалла.

Анчах ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕ лекциллĕ пропагандăна йĕркелес ыйту çине кирлĕ пек пăхми пулчĕ. Теори, политика илхуçалăхĕ, наукăпа техника, медицина, сутçанталăк тата ытти ыйтусем тăрăх районти ĕçсыннисем хушшинче докладсемпе лекцисем ытла та сахал иртереççĕ.

ВКП(б) райкомĕ çумĕнчи лекторсен ушкăнĕ 15 çынна пĕрлештерсе тăрать. Лекторсем пурте тенĕ пекех пропаганда ĕçне нумайранпа хутшăнаççĕ, теори ыйтăвĕсене лайăх пĕлеççĕ. Большевизм теорипе историне вĕренекенсене пулăшу парасси—лекторсен тĕп задачи. Районта марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем 300 çын ытла. Вĕсем валли ВКП(б) историйĕ, марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх лекцисем тăтăш иртерни кирлĕ. Райком лекторĕсем кадрсен ыйтăвĕсене тивĕçтермеççĕ.

Нумай лекторсене ĕçе хутшăнтарман. Парти вĕренĕвĕн çĕнĕ çулĕ пуçланнăранпа райком лекторĕсем мĕн пурĕ те 3 лекци кăна иртерпĕ. Лекторсен ушкăнĕн руководителĕ ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Чирков юлташ лекторсене ертсе пырас ĕçе пĕтĕмпех пропагандăпа агитаци пайĕ çине йăвантарнă.

Докладчиксен ушкăнĕ çинчен те çаннах каламалла. Районти ертсе пыракан чылай работниксем, сăмахран, райсовет исполком председателĕн заместителĕ Трофимов юлташ, районти прокурор Чернов юлташ тата ыттисем те рабочисен, колхозниксен тата интеллигенци пухăвĕсенче сайра-хутра кăна докладсем туса параççĕ. Район центрĕнчен инçетри колхозсенче, уйрăмах уй-хир бригадисемпе фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче райком докладчикĕсем уйăхĕ-уйăхĕпех пулмаççĕ. Предприятисемпе колхозсенче иртерекен докладсемпе лекцисене итлеме чылай чухне актива кăна пухаççĕ, ĕçсыннисен анлă массине хутшăнтармаççĕ.

Лекциллĕ пропагандăна райсовет исполкомĕн культурăпа сутĕç учрежденийĕсен пайĕн, çавăн пекех ВЛКСМ райкомĕн активлă туса пымалла. Анчах вĕсем çак хисеплĕ ĕçе куллен хутшăнмаççĕ.

Я. ВАСИЛЬЕВ.

Республикăри ĕççыннисем СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарни çинчен пĕлтернине пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç

Тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать

СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарни çинчен СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, ССР Союзĕн пĕтĕм промышленноçĕн валовой продукцийĕ 1950 çулхипе танлаштарсан 1951 çулта 16 процент ӳснĕ.

— Çак чаплă çитĕнӳве эпир хамăр завод коллективĕ тунă çитĕнӳсенче аван куратпăр,—тет Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод директорĕ А. Якунин юлташ.

Тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетессишĕн социализмлă ăмăртса ĕçлесе, пирĕн завод коллективĕ иртнĕ çулта ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕ. Çулталăкри плана срокчен—ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултартăмăр, планран иртересе 10 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăлартăмăр. Ĕç тухăçлăхĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, 26 процент ӳснĕ. Темиçе миллион тенкĕ тупăш илсе, накоплени тумалли плана 117 процента яхăн тултарнă. Королев, Литвинский, Мищенко тата ытти хăшпĕр стахановецсем пĕлтĕр виçĕ çул çурăшар нормине пурнăçларĕç. Заводра 165 бригада лайăх продукци туса кăларакан бригада ятне илессишĕн кĕрешет.

Завод коллективĕ коммунизмăн аслă стройкисен заказĕсене часлă пурнăçлать.

Заводра рационализаципе изобретательство ĕçĕ анлă саралнă. Рационализаторсен сĕнĕвĕсене пурнăçласа, иртнĕ çулта пĕр миллион та 609 пин тенкĕ перекетленĕ.

Завод коллективĕ умĕнче кăçал тата та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Продукци туса кăларасси ӳсет. Заводри строительсем кăçал культура керменĕ, больница çурчĕ, пурăнмалли çĕнĕ çуртсем чылай туса лартаççĕ.

Статистика Управленийĕ пĕлтерни пире тата та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать, çĕнĕ вăй хушать.

Планран иртерсе продукци парассишĕн

Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи чи лайăх продукци туса кăларакан Егорова юлташ бригадинчи работницăсем кăнтăрлахи каçу вăхăтĕнче пурте пĕр çĕре пуçтаранчĕç.

— Тăван çĕршывра пĕтĕм продукци туса кăларасси пĕлтĕр 1950 çулхинчен 16 процент ытларах ӳснĕ,—терĕ бригадир.—Продукци пахалăхĕ лайăхланни, продукцисен ассортиментĕ нумайланни промышленноçăн иртнĕ çулхи пысăк ӳсĕмĕлĕхĕ пулса тăрать. Иртнĕ çулхи плана пирĕн бригада 150 процент тултарчĕ. Планран иртерсе эпир çĕр миллиона чылай перекетлесе хăвартăмăр. Çĕнĕ çулта график тăрăх ĕçлесе, бригада январь уйăхĕнчи плана срокчен тултарчĕ. Тăван çĕршыв экономикăпа культура строительствинче тунă чаплă çитĕнӳсем пире коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн татах та хастарлăрах кĕрешме хавхалантараççĕ.

Пир-авăр фабрики пĕлтĕр планран иртерсе 446 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларчĕ. 85 пин килограмм ытла çип арларĕ. Планран иртерсе арланă çиппен татах 850 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларнă. Фабрика коллективĕ иртнĕ çулта 263 центнера яхăн çĕр мамăкĕ, 110 центнер çип, çавăн пекех 491.8 пин киловатт-сехет электроэнерги перекетлерĕ.

Фабрикăра халĕ кăçалхи задание срокчен тата иртерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту куллен-кун саралса пырать. Январь уйăхĕнчи пысăкланнă плана вăл ăнăçлă тултарчĕ.

Пур цехсенче бригадăсенче те график тăрăх ĕçлеççĕ.

СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне иртнĕ çулта тултарни çинчен пĕлтерни пур работницăсене те тата лайăхрах ĕçлеме вăй хушать.

А. НИКОЛАЕВ.

Тăван çĕршыв ӳсĕмĕсемшĕн савăнатпăр

ВАРНАР. Пуян та тулăх пурнăçпа пурăнаççĕ Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем. Вĕсем иртнĕ çулхи илхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата пур ĕçсене те лайăх туса пĕтерĕç. Колхозниксем кашни гектартан вăтамран 15-шер центнер тĕштырă туса илчĕç. Колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен тата иртерсе пурнăçларĕ, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тĕштырă, пахча-çимĕç нумай валеçсе панă. Колхоз общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те иртерсе тултарнă, выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш çултан-çул ӳсе пырать. Колхозниксен хăйсен колхозĕ. Тăван çĕршыв кулленех ӳсе тĕреклене пынишĕн чунтан савăнаççĕ. Çак кунсенче вĕсем СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарни çинчен СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Центральнăй Статистика Управленийĕ пĕлтерни çинчен доклад итленĕ хыççăн тулли те уçă кăмăлпа калаçса пăхрĕç. Ку ыйтупа колхозăн парторганизацийĕн секретарĕ Н. Кириллов юлташ доклад туса пачĕ.

— Статистика Управленийĕ пĕлтерни пирĕн çĕршывăн ĕççыннисем хăйсен Тăван çĕршыва пурнăçа мухтавлă производствăлла ĕçлени çинчен, çак ĕçре вĕсем пысăк çитĕнӳсем тунă çинчен калать,—терĕ колхозниксем пĕр шухăшлă пулса. Пирĕн çĕршывра промышленность, илхуçалăх, халăх культури хăвăрт ӳсе пынине эпир хамăр район, колхоз пурнăçĕнче аван куратпăр. Районти колхозсем пĕлтĕр çĕнĕ машинăсем нумай туянчĕç. Эпир кашни киле радио кӳртрĕмĕр. Килĕрен тенĕ пек хаçат-журнал. Çакă вăл пирĕн ӳсĕм. Тăван çĕршыв, большевиксен партийĕ, аслă Сталин панă ырлăх.

Центральнăй Статистика Управленийĕн пĕлтерĕвĕпе хавхаланса колхозниксем тата тăрăшарах ĕçлеме—вăрлăх хатĕрлемелли плана пур енĕпе те Совет Çарĕн кунĕ тĕлне тултарма, çакăн çурхине лайăх хатĕрленсе çитме обязательствăсем илчĕç.

Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче çĕнĕ оборудованине лайăх ĕçлеттерессишĕн социализмлă ăмăрту анлă саралнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çип арлакан цехри Л. Черенкова стахановка катушкăсене улăштарать.

Б. ТИМКИН фотоӳкерчĕкĕ.

Рабочисен хастарлăхĕ

Кăçал Куславккари заводăн пĕлтĕрхинчен 25 пин тăваткăл метр чухлĕ ытларах пурăнмалли çурт туса кăлармалла.

Завод коллективĕ çулталăкри производство планне Сталинла Конституци Кунĕ—декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма, ĕç тухăçлăхне 7 процент, оборудовани тухăçлăхне 5 процент ӳстерме, продукцин хăйне ларакан хакне 7 процент чакарма, пур ĕçе те график тăрăх туса пыма, планран иртерсе 0,5 миллион тенкĕ тупăш тума социализмлă обязательство йышăнчĕ. Çавăн хыççăн цехсенче социализмлă ăмăрту анлă саралчĕ.

Январь уйăхĕнче завод, пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 6,8 процент ытларах продукци туса кăларчĕ, продукцин хăйне ларакан хакне 2 процента яхăн чакарчĕ.

Цехсем хушшинчи ăмăртура уйрăмах столярнăй цех коллективĕ паха тĕслĕхсем кăтартнине палăртас пулать. Январĕн 22-мĕшĕ тĕлне цехри рабочисенчен 80 проценчĕ уйăхри ĕç нормине тултарчĕ. А. Манников, Ю. Серов, П. Мосолов столярсем, М. Александрова станочница, Н. Кудряшов сборщик ĕç нормине куллен 2—2,5 хут иртерсе тултараççĕ. Вĕсем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма çĕнĕрен те çĕнĕ майсем тупаççĕ. Стахановецсем пăчкăсемпе фрезăсене хăвăртрах улăштарса лартса, ĕçе механизацилесе тата ытти майсемпе усă курса, чылай вăхăт перекетлеççĕ.

Кăçал цехра уйрăмах пахалăх кăтартăвĕсене лайăхлатассишĕн вăйлă ăмăрту пырать. Кашни рабочи продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, чĕртавара, материал, электроэнерги перекетлессишĕн, станоксене лайăхрах ĕçлеттерессишĕн кĕрешет. Цехра продукци пахалăхĕ чылай ӳсрĕ. Перекетлĕх режимĕ çирĕпленчĕ. 1951 çулхи декабрь уйăхĕнче пурĕ 18 пин тенкĕлĕх материал перекетленĕ пулсан, январь уйăхĕнче, икĕ вунăкунлăхра, 19,5 пин тенкĕлĕх перекетленĕ. Цех коллективĕ продукцин хăйне ларакан хакне кашни операци тăрăх чакарассишĕн ăмăртать. Столяр-комсомолец Г. Андреев юлташ 273 тенкĕлĕх, К. Андрианов сборщик—368 тенкĕлĕх, Р. Юсова станочница—386 тенкĕлĕх материал тата электроэнерги перекетленĕ.

Рабочисен пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ хăвăрт ӳсе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Кăçал чылай рабочисем производство культурине ӳстерме пулăшакан рационализаторла сĕнӳсем пачĕç. В. Филиппов столяр паркета çĕнĕ меслетпе туса хатĕрлеме сĕнӳ пачĕ. К. Жарнинов, А. Петров, Г. Куратов юлташсем те паха сĕнӳсем пачĕç.

Çуртсем тăвакан цехра малта пыракансен опытне сарасси, пĕр-пĕрне юлташла пулăшасси анлă саралса пырать. Е. Колпакова юлташ ертсе пыракан бригада заданине тултарса пынă. Анчах рабочисем уйпа лăпланса ларман тата лайăхрах ĕçлесшĕн пулнă. Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, станочница М. Филиппова юлташ çав бригадăри 15 работницăпа хăйĕн меслечĕпе тата опычĕпе паллаштарнă, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшнă. Халĕ Колпакова юлташ ертсе пыракан бригада заданине куллен 150—160 процент тултарать, паха детальсем туса хатĕрлет. П. Захаровăпа П. Аблясова стахановкăсем 8-шар çынна хăйсен опычĕпе паллаштарнă.

Çак кунсенче хăма çуракан цех коллективĕ пысăк хастарлăхпа ĕçлет. П. Христофоров, П. Киселев, Н. Меняев рамщиксем ĕç нормине тăтăш иртерсе тултараççĕ, рамăсене тухăçлă ĕçлеттереççĕ, паха хăма çеç çурса кăлараççĕ. Стахановла вахтăна тăрса, А. Левапова, Ю. Стажева обрезчицăсем, комсомол организацийĕн секретарĕ М. Иваньшина бракер куллен паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Пĕтĕм завод коллективĕ çĕршыври шахтерсем валли пурăнмалли çуртсем ытларах туса кăларассишĕн, çуртсен пахалăхне лайăхлатассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн чун-чĕререн тăрăшса ĕçлет.

М. АЛЕКСАНДРОВ.

ШКУЛТИ КОМСОМОЛПА ПИОНЕР ОРГАНИЗАЦИЙĔ

В. И. Ленин ячĕпе тăракан пионер организацийĕ учителе унăн йывăр тата нумай енлĕ ĕçĕнче пулăшса пыракансенчен пĕри пулса тăрать. Пирĕн пионер дружининче 270 пионер. Шкулти учитель-комсомолецсем яланах çавна асра тытаççĕ: пионерсемпе ĕçлесси совет учителĕшĕн унăн тĕп ĕçĕ çумне хушса панă ĕç мар, вăл ачасене вĕрентес тата воспитани парас ĕçĕн чи кирлĕ пайĕ пулса тăрать.

Калас пулать, вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче пионер отрячĕсемпе звеносен ĕçĕсем пур чухне те пионерсемшĕн интереслĕ, паха содержанилĕ пулаймарĕ. Пионер отрячĕсен ĕç планĕсене час-часах пионерсен шухăш-кăмăлĕсене шута илмесĕр тунă. Уйрăмах 5-мĕш классенчи отрядсен ĕçĕнче çавăн пек пулнă. Вожатăйсем отрядăн ĕç планĕсене хăйсем пĕр пĕччен кăна тунă. Пионерсен шухăш-кăмăлне шута илмесĕр тунă плансем пионерсен пултарулăхне аталантарса пыма чăрмантарнă. Çитменнине тата çавăн пек плансем пурнăçа та кĕрсе пырайман, палăртнă сборсене вăхăтра иртермен, иртернĕ сборсем те илея тата содержани тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра пулман. Пионер дружини вĕренекенсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçленĕ.

Асăннă çитменлĕхсем чи малтан шкулти комсомол организацийĕ пионерсен ĕçне кирлĕ пек ертсе пыманнинчен килнĕ. Çав вăхăтрах пионер дружинин ĕçĕ çине учительсем те тивĕçлипе пăхман.

Пионер дружинин ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине шута илсе, вĕсене пĕтерме пĕтĕм вăй хуратпăр. Малтанах эпир ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн постановленине учитель-комсомолецсен уçă пухăвĕнче сӳтсе яврăмăр, пухăва шкулти учительсене пурне те чĕнтĕмĕр. Пуху хамăр шкулти пионер дружинин ĕçне пленум кăтартăвĕсемпе танлаштарса пăхрĕ, çавăн пекех дружина пурнăçĕнчи çитменлĕхсен сăлтавĕсене кăтартса, вĕсене пĕтерес майпа мĕн тумаллине палăртса хăварчĕ.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕ хыççăн икĕ уйăх ытла иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче пирĕн шкулти пионер дружининчи пурнăç курăммаллах лайăхланчĕ. Пĕтĕм шкул коллективĕ пионерсен ĕçĕпе интересленме пуçларĕ. Комсомолецсем пионерсене ертсе пырас ĕçре пулнă çитменлĕхсене пĕтерсе пыраççĕ. Учитель-комсомолецсен пухăвĕсенче чылай вожатăйсен ĕçĕсем çинчен отчетсем итленĕ.

Отрядсемпе звеносен ĕçĕ, малтанхипе танлаштарсан, нумай лайăхланчĕ. Ун çинчен 7-мĕш «В» класс руководителĕ Н. Сергеев хăйĕн иккĕмĕш чĕрĕкри ĕçĕсем çинчен панă отчетра çапла çырать: «Отряд сборĕсем интереслĕ иртме пуçларĕç. Сбора кашни пионер хатĕрленет. Ку вăл ачасене туслă коллектива пĕтĕçтерме пулăшрĕ. Халĕ отрядра пурнăç тулли юхпа вĕрет. Эпир нумай интереслĕ кĕнекесем вуласа сӳтсе яврăмăр, темиçе хутчен те кино куртăмăр. Спорт—отрядри кашни пионерăн чи юратнă ĕçĕ».

Паллах, отряд вожатăйĕ З. Федорова хăй кăна ĕçленĕ пулсан, кăтартнă ĕçсене тума йывăр пулнă пулĕччĕ. Вĕсене класс руководителĕпе отряд вожатăйĕ алла-аллăн тытăнса ĕçленипе тунă.

Пионер отрячĕсен ĕçне кирлĕ пек йĕркеленĕ классенче вĕренӳ пахалăхĕ пысăк, унта дисциплина çирĕп. 7-мĕш «В» класс—чи примерлă класс. Кунта вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем çукпа пĕрех, дисциплинăна пăсакансем те курăнмаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, ку отрядри пионерсем ыттисемшĕн примерлă пулса тăчĕç.

Анчах отряд вожатăйĕсене тата советчĕсене пулăшса пырассине хăйсен ĕçĕ вырăнне шутламан класс руководителĕсем те пур-ха. Вĕсем «манăн ĕç—вĕрентесси тата вĕренӳ дисциплинине сăнасси, пионерсемпе ĕçлеме анĕ пултараймастăп. Отрядпа мĕн ĕçлемеллине эпĕ пĕлместĕп» теççĕ. Кун пек учительсем питтех те сахал. Вĕсене çапла калас килет: «Хаклă юлташ, пионерсемпе ĕçлесси сирĕн ĕç, çавăнпа та хăвăр пĕлĕвĕре куллен ӳстерсе пырăр, пионер отрячĕсен дневникĕсене пăхса тухăр, пионерсемпе хăйсемпе калаçса пăхăр, вара мĕнле ĕç тăвасси пĕтĕмпех паллă пулĕ».

Ачасене воспитани парас ĕçре аслă совет педагогĕн Антон Семенович Макаренкăн сăмахĕсене яланах асра тытни кирлĕ. Çирĕп, пĕр шухăшлă коллектив тумалла, вара яланах ун çине таянса ĕçлемелле. Пирĕн шкулти нумай учительсем çавăн пек тăваççĕ те. Вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче 1-мĕш отрядри А. пионер шкула кун сиктерсе çӳретчĕ, урокçене хатĕрленсе пымастчĕ, юлашкинчен шкула пачах çӳреме пăрахрĕ. Отряд вожатăйĕ ăна пур майсемпе те шкула илсе килме тăрăшнă, анчах нимĕн те тухман. Кайран, класри комсомолецсемпе пионерсем пĕр шухăшлă пулса, ăна шкула илсе киме йышăннă. ун патĕнче темиçе хут та пулнă. унпа та, амăшĕпе те калаçнă. Юлашкинчен вĕренекен чăнипех те шкула çӳрекен пулчĕ тата нумай юсанчĕ. Урокçене вăл яланах хатĕрленсе килекен пулчĕ, дисциплинăна пăсмасть. Халĕ вăл комсомол ретне кĕме хатĕрленет.

Çак тĕслĕх вĕренекенсен туслă коллективĕ шкулта пысăк вăй пулса тăни çинчен калать.

Урок—шкулти занятисен тĕп форми. Ачасене вĕрентес тата воспитани парас ĕç пурнăçĕнче ытларах урокра пулса иртет. Апла пулсан шкулти ĕçсен ăнăçлăхĕ урокçем мĕнле иртнинчен килет. Унăн чи малтан, паллах, учитель ответлă. Анчах унпа пĕрлех çавна та манма юрамасть: урока хатĕрленес тата иртерес ĕçре учителе пионер тата комсомол организацийĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

Пирĕн шкулта нумай урокçем йĕркеллĕ, илея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртеççĕ. Вĕренекенсем учитель ăнлантарса панине юлташĕсем ответленине тимлĕ итлеççĕ, килти ĕçсене йĕркеллĕ тата вăхăтра туса килеççĕ. Уйрăмăнах ботаника, химии, зоологи урокĕсем аван иртеççĕ. Ачасем ку предметсене аван пĕлеççĕ, урокçенче яланах активлă. Учительсем хăйсем те урока лайăх хатĕрленсе пыраççĕ, пионерсем те учительсене пысăк пулăшу параççĕ. Пионер-юннатсем ку предметсемпе хăйсен вăйĕпе паха коллекцисем, гербарисем, ӳсентăрансен альбомĕсем хатĕрленĕ. Çавăнпа вара кашни урокрах, кашни темăпах нагляднăй пособисемпе усă курма пулать. Нагляднăй пособисен пĕлтерĕшне кашни учитель аван пĕлет.

Пионер организацийĕн пулăшăвĕ çакăнта кăна мар. Ку вăл ĕçĕн пĕр енĕ çеç. Пионер организацийĕн тарăн тата çирĕп пĕлӳшĕн кĕрешес ĕçĕн формисемпе меслечĕсем тĕрлĕрен: предметлă сборсем, экскурсисем, вĕренекенсен лайăх тетрачĕсен выставкисем, предметлă тата техникăлла кружоксенчи ĕçсем т. ыт. те. Анчах çак майсемпе эпир кирлĕ пек усă курмастпăр-ха.

Иккĕмĕш чĕрĕкĕн итогĕсем пирĕн шкулта вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ нумай чакнине кăтартаççĕ. Çапах та чылай отрядсенче начар паллă илекенсем пур-ха, ытларах—вырăс чĕлхипе. Ăнланмалла ăнтĕ, кунта учителе вожатăйăн пулăшмалла, учительпе пĕрле вырăс чĕлхипе сбор иртермелле, звеносенче калаçусем иртермелле, пионерсене мĕнле вĕренмеллине кăтартса памалла. Çитес уйăхра отрядсенче вырăс чĕлхине вĕренме пулăшакан сборсем иртерме палăртнă.

Анчах вырăс чĕлхипе вĕрентекен хăшпĕр учительсем комсомол комитечĕ темиçе хутчен асăрхаттарнă пулин те пионер организаци пулăшăвне кирлĕ пек хаклаççĕ-ха, çав вăхăтрах хăйсен урокĕсем ăпалăй, начар иртеççĕ.

Шкул пурнăçĕнче учительсен комсомол организацийĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. ВЛКСМ XI-мĕш съезчĕ кăтартнă тăрăх, учительсен комсомол организацийĕн шкул директорне ачасене вĕрентес тата воспитани парас ĕçе лайăхлатса пыма пулăшмалла, шкулти комсомол тата пионер организацийĕсен ĕçĕсене хутшăнмалла, шкул ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерсе пыма пулăшмалла.

Пирĕн шкулти учительсен комсомол организацийĕнче 11 комсомолец-учитель. Ку вăл—пысăк вăй. Шкулта парторганизаци çук пирки унăн пĕлтерĕшĕ тата та ытларах ӳсет. Учитель-комсомолецсем пионерсен ĕçне йĕркелесе пыраççĕ, пурте отряд вожатăйĕсем пулса ĕçлеççĕ, тĕрлĕ кружоксене ертсе пыраççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем шкулта чи лайăх производственниксем шутланаççĕ, ачасем вĕсене юратаççĕ, хисеплеççĕ.

Комсомол организацийĕ пуçарнипе шкулта предметлă тата техникăлла кружоксем организациленĕ. Радиокружок членĕсем кăçалхи вĕренӳ çулĕнче 21 детекторлă радиоприемник тунă, вĕсенчен чылайăшне колхозниксен килĕсене лартса панă. Пионер-юннатсем çывăхри колхозсене вăрлăх пахалăхне тĕрĕслеме пулăшаççĕ. Çуллахи вăхăтра вĕсем уйра е колхоз пахчисенче ĕçлерĕç, «Слава» колхоза 7 гектар кок-сагыз тымарĕ пухса пачĕç.

Пионер организацийĕ тăвакан ĕçсенчен тепри вăл—физкультурăлла-массăллă ĕç пулса тăрать. Эпир çул çитнĕ пур пионерсене те «БГТО» значокне илмелли нормăна пама хатĕрлетпĕр. Хĕллехи вăхăтра пионерсем йĕлтĕр тата коньки чупмалла интересленеççĕ. И. В. Сталин ячĕпе иртернĕ кроса шкулти аслă классенчи пур комсомолецсемпе пионерсем те хутшăнчĕç, вĕсенчен 31 çын «БГТО» значокне илмелли нормăна пачĕç. Районти ăмăртура пирĕн шкул команди иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Çитĕнӳсемпе пĕрлех ку ĕçре çитменлĕхсем те пур. Хăшпĕр чухне секцисен занятийĕсем иртеймеççĕ. Ку вăл ытларах шкулта спорт инвентарĕсем çуккинчен килет, уйрăммăнах гимнастика, йĕлтĕр секцийĕсем валли хатĕрсем çитеĕксĕр.

Ачасене воспитани парасси йывăр, ответлă тата хисеплĕ ĕç. Кама ăна шанса панă, вăл чи малтан хăйĕн воспитанникĕсемшĕн пример пулмалла, мĕншĕн тесен вĕренекен яланах учитель тата вожатăй пек пулма тăрăшать. Çавăнпа та воспитателĕн хăйĕн теориллĕ тата политикăллă пĕлĕвне куллен ӳстерсе пымалла.

Пирĕн шкулти 8 комсомолец-учитель хăйсен политикăллă пĕлĕвне «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружокра ӳстереççĕ, 3 комсомолец-учитель марксизм-ленинизм теорине хăйсем тĕллĕн вĕренеççĕ. Аслă классенче вĕрентекен учитель-комсомолецсем педагогика институтĕнче заочно вĕренеççĕ.

Юлашкинчен çакна каламалла. Пионер дружинин ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтерейменха. Паллах, уншăн шкулти комсомол организацийĕ айăплă. Çитменлĕхсене пĕтерес тесе эпир çине тăрса тăрăшатпăр.

А. КОТЛЕЕВ,

Сичĕ çул вĕренмелли шкулти комсомол комитечĕн секретарĕ.

Паваркасси, Курачăк районĕ.

Критикăпа библиографи

„Пирĕн юрă"*)

Н. И. Шелепи ача-пăча валли çырнă сăвви-юррисене уйрăм кĕнекепе темиçе хутчен те кăларнă ĕнтĕ. Вĕсем кашни кăлармассеренех хăвăрт сутăнса пĕтнĕ. Халăх поэчĕн нумаях пулмасть кĕçĕн çулхи ачасем валли пичетленсе тухнă «Пирĕн юрă» ятлă кĕнеки çинчен те çавнах каламалла: вăл хăйĕн вулаканĕсене часах тупĕ, çамрăк ăру ăна часах курĕ, тивĕçлипе хаклĕ, юратĕ.

«Пирĕн юрă» кĕнеке «Чăваш сăвви» ятлă сăвăпа пуçланать. Унта Н. И. Шелепи чăвашсен революцичченхи пурнăçĕ çинчен çырнă, патша саманинче чăваш сăввине, чĕлхине тĕрлĕ чиновниксем хĕсĕрленине кăтартса панă.

Авал, патша пур чухне,
Пирĕн чăваш ялĕнче,
Вăрттăн çĕрте, пытанса,
Йăвашланса, вăтанса
Пĕр сар кайăк пурăннă —
Вăл имшерккен курăннă...

Çак «вăрттăн çĕрте пытанса» пурăннă сар кайăка—чăваш сăвви-юррине—Октябрьти Социализмлă революци ирĕке кăларчĕ. Çапла вара, чăваш юрри чăнкипех те çунатланчĕ, хавасăхпа тулчĕ, поэт калашле, «революци ырлăхне хăй тытăнчĕ ĕнерме».

Ирĕклĕх панă революци кунĕсене аса илсе, чăваш сăвви çинчен халăх поэчĕ çакăн пек йĕркесем шăрантарнă:

Юрла, юрла, сар кайăк,
Шăпчăк сас пек сассупа!
Санăн юнна ĕçекен
Тăшман сăнни хуçăлчĕ!
Сана ирĕк янрама
Аслă тĕнче уçăлчĕ!

Аслă тĕнчене уçса паракан—коммунистсен партийĕ, аслă çулпуçăмăрсем Ленинпа Сталин!

«Ленин шухăшĕ» ятлă сăвăра поэт аслă учителĕн, пĕтĕм тĕнчипе паллă революционерăн В. И. Ленинăн шухăшĕсем питех те хăватлă, чаплă пулни çинчен, вĕсем пĕтĕм çĕр çинчи йĕрвесĕрлĕхе, таимарлăха, тупă пенĕ пек, ишсе пыни çинчен, мĕнпур ĕçхалăх ирĕклĕхĕшĕн хурçă шăратса ививĕс хуни çинчен çырать.

Ленин шухăшĕсене нимĕнле вăй та чарас çук,—тет вăл,—вĕсем тимĕр карттасем, вăрмансем урлă, çил пек ытăнса, çиçĕм пек кĕреççĕ, этем ăрăвĕн çулне кăтартса, çĕре çутатса, маяк пек çутатаççĕ, пур ĕççыннисене пĕрлешме чĕнеççĕ, миллионшар çынна çитсе вăратаççĕ, вĕсене пусмăр тĕнчипе кĕрешме хурçă пек çирĕп вăй чăмăртаççĕ.

Н. И. Шелепи хăйĕн «Аслă Сталин» ятлă сăввинче Ленинăн аслă ученикĕ — Сталин юлташăн чаплă ĕçĕсем çинчен çапла çырать:

Ылтăн та мар эсĕ,
Кĕмĕл те мар.
Хавасла сан ĕçÿ!
Чĕлхÿ—кăвар.

Ылтăнтан та хаклă,
Кĕмĕлтен те.
Халĕ те эс чаплă,
Ĕмĕрех те.

Çĕр çийĕнче сана
Пур тĕлте те
Лайăх пĕлсе тăрать
Пур чĕлхе те.

Эсĕ чĕре патне
Кăвар хуран.
Коммунизм çулĕпе
Ертсе пыран.

Тÿрех калас пулать: Н. И. Шелепи аслă çулпуçсем çинчен çырнă сăвăсем чи паха сăвăсем пулса тăраççĕ. вĕсем чăваш халăхĕн шухăш-кăмăлне палăртса параççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем поэт хăйĕн халăхĕпе мĕн тери тачă çыхăнса ĕçленине кăтартаççĕ.

«Пирĕн юрă» кĕнекене кĕртнĕ ытти сăвă-юрăсенче те совет ачи-пăчисен ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсем, ĕçĕсем яр-уççăн курăнса тăраççĕ. Совет ачисене «телейлĕ ачасем», тет поэт. Вĕсем савăнса вĕренеççĕ, ĕçлеççĕ, выляççĕ. Совет ачисен кашниннех пысăк ĕмĕт: хăшĕ вĕçевçĕ пулассăн, тепри урăх ĕçпе халăха усă тăвассăн,—вĕсем пурте çĕршыва вăй парассăн, тĕреклетессĕн, тăшман çулне пÿлессĕн!

«Тума пулнă—тăватпăр!» ятлă сăвăра поэт пирĕн ачасен хавасăхне кăтартать:

Пурте харăс çĕкленсе,
Хăвăрт сиксе тăрăр та
Ситсе ÿкĕр çиçĕм пек
Çут ĕмĕте пурсăр та.

Харăс-харăс çĕкленсе,
Кĕрĕс-кĕрĕс сикĕпĕр!
Çитес тенĕ вырăна
Çитме пулнă—çитĕпĕр!

Хăшĕ—çÿлтен вĕçĕпĕр,
Хăшĕ [illegible] [illegible],
Пĕлĕт ĕçнĕ еврлĕ
С[illegible] Ÿсĕпĕр!

Ку сăвва вулакă чухне ачасем хавасланмасăр тÿсеймеççĕ. Ачасем çеç мар—çитĕнсе çитнĕ çынсем те çавах. «Тума пулнă—тăвăпăр»,—çакă вăл совет çыннисен ĕçре хаваслантаракан шухăш-кăмăлĕ. Эпир хамăр ĕçсене халăхшăн, государствăшăн, Тăван çĕршывшăн тăватпăр. Çакă вăл пирĕн ĕмĕте, вăй-хала çĕклет, мĕншĕн тесен тăван халăхран, тăван государствăран, Тăван çĕршывран хаклăраххи тĕнчере урăх нимĕн те çук.

Н. И. Шелепи кĕнекинчи ытти сăввисенче çутçанталăк çинчен, ывăс курăксемпе чĕрчунсем çинчен çырнă. Вĕсене вуласан, çутçанталăкăн картинисем куç умне тухса тăраççĕ. Акă, «Çуркунне» ятлă сăввах илер. Хĕвел кулса тăнă евĕрлĕ пăхать: сивĕ йĕрсе, çукăрса, куççуль юхтарса тăрать,—кунта пр кайнине сăнласа панă. Тепĕр тĕслĕх: шăкăлтатса калаçса, шăнкăртатса, шавласа, пыра-пыра капланать,—кунта юханшыв тăрăх пăр анниие кăтартса панă.

Н. И. Шелепи халăх сăмахĕпе ăста усă курнă. Поэт ача-пăча сăмахĕсене те лайăх пĕлнĕ. Упа çинчен вăл ачасен сăмахĕсемпе: «Эпĕ упа—утмав, ик урапа утакан», тет. Кашкăр çинчен: «Эпĕ кашкăр—кашман», тет. Çак сăмахсене чăваш ачисенчен часах илтме пулать, ун пек сăмахсемпе вĕсем тĕрлĕ вăййисенче усă кураççĕ.

Çамрăк ача пыласшăн, вăйă урлă вăл сут тĕнчене пĕлекен пулать,—тенĕ М. Горький.—Ача сăмахпа та, сăмахра та вылять. шăпах сăмахпа выляннипе пĕчĕк ача тăван чĕлхерн сăмахсен пĕлтерĕшне туйса илме вĕренет, унăн музыкине илтсе ăнланать.

Н. И. Шелепи нумай вĕреннĕ поэт пулман вăл аслă шкулта мар, вăтам шулта та вĕренсе курман. Унăн шкулĕ—пурнăç. Вăл халăхран вĕреннĕ, халăх — ăна вĕрентнĕ. Шелепи кашни сăвăрах халăх пурнăçĕн мĕнле те пулин енне кăтартса пама тăрăшнă.

В. ДОЛГОВ.

*) Н. И. Шелепи, Пирĕн юрă. Ача-пăча сăввисем. Чăвашгосиздат, 1951 ç., 56 стр. Редакторĕ Н. Ф. Ильбеков.

Ĕççыннисен ыйтăвĕсем çине тимлĕ пăхмалла

Ĕççыннисен çырăвĕсемпе ыйтăвĕсем тата сĕнĕвĕсем массăсен политикăллă активлăхне, вĕсем учрежденисемпе предприятисен ĕçĕсене лайăхлатассишĕн, Тăван çĕршывăн хăватне татах та çирĕплетсе тĕреклетессишĕн тăрăшнине кăтартаççĕ. Рабочисемпе колхозникасен çырăвĕсем, жалобисем тата сĕнĕвĕсем хуçалăх руководителĕсен ĕçĕсенчи ситменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерме пулăшаççĕ.

Çак кунсенче Канаш хулинче актив пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура çакă палăрчĕ: чылай предприятисемпе учрежденисенче тата организацисенче ĕççыннисен жалобисемпе ыйтăвĕсене пăхса тухас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Ку тĕлĕшпе уйрăмах хула Совет исполкомĕпе унăн пайĕсенче ситменлĕхсем нумай. Кунта ыйтусемпе жалобăсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ, вĕсене учета илессине ялăх йĕркеленĕ. 1950—1951 çулсенче пурĕ 1.499 ыйтусемпе жалобăсем илнĕ, анчах та вăл шутран 212 жалобăпа ыйтăва вăхăтра пăхса тухман.

1951 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕнче вагонсем юсакан заводри рабочисен ушкăнĕ хулара транспорт япăх ĕçлени çинчен пĕлтернĕ. Вокзалпа вагонсем юсакан завод хушшинче автобуссем расписанипе пăхнă пек çÿремеççĕ. Анчах та исполком пайĕнчи кума çитсе те рабочисен çырăвĕ çине ответ паман, транспорт ĕçне лайăхлатассишĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

Хулари предприятисемпе учрежденисенче те ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе жалобисене пăхса тухассине исполком япăх йĕркеленĕ. Ку тĕлĕшпе вагонсем юсакан заводра ĕçсем питĕ начар. Заводăн коммунальнăй пайĕнче рабочисен ыйтăвĕсемпе жалобисене учета илесси япăх тăрать, вĕсем çине сайра-хутра кăна ответлеççĕ. Коммунальнăй пай начальникĕ Краснобаев юлташ рабочисен ыйтăвĕсене тинĕстерес ĕç çине чунсăррăн пăхать. Заводра ĕçлекен работница Андреева юлташ хăйĕн квартирне юсама 1951 çулхи август уйăхĕнчех ыйту панă. Анчах та çак кума çитсе те Андреева юлташ ыйтăвĕ çине ответ паман, унăн квартирне юсаман.

Канашторгра та ĕççыннисен жалобисене пăхса тухасси япăх пырать. Канашторг директорĕ Балаев юлташ жалобăсемпе ыйтусем çине çиелтен [illegible] пăхать, суту-илÿ организацийĕсен ĕçĕсенчи ситменлĕхсене пĕтерме çителĕксĕр тăрăшать. Çакă вăл Канашторг таварçаврăнăш планне тултараймасăр та курăнать. Канашторгăн пĕрремĕш магазинĕнче тăрăленĕ апат-çимĕç начаррăх, официанткăсем клиентсене вăхăтра тивĕçтермеççĕ. Çак ситменлĕхсене кăтартса жалобăсен кĕнеки çине сахал мар çырнă. Анчах та чăйнăй заведующийĕ Баранов юлташ ку жалобăсем тăрăх кирлĕ мерăсем йышăнас вырăнне вĕсене çыраканнине çеç [illegible].

Жалобăсемпе ыйтусем çине сÿрĕккĕн, бюрократла пăхни çĕнтерÿ шкулĕсенче, хула больницинче, пăравусем депойĕнче, учительсем хатĕрлекен институтра, апатсиĕç комбинатĕнче, чугун çул станцийĕнче тата ытти предприятисемпе учрежденисенче те пур.

Ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе жалобисене пăхса тухас ĕçри ситменлĕхсене пĕтермелле. Предприятисемпе учрежденисен тата организацисен руководителĕсем совет çыннисен ыйтăвĕсене куллен тивĕçтерессишĕн тăрăшмалла.

И. ЖАДЕЦКИЙ.

Вăйлă тырпулшăн пуçарнă кĕрешÿ

Пĕрлешсе пысăкланнă «Новая жизнь» колхоз членĕсем иртнĕ çулта сĕрĕс культурине ÿстерес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатас, артелĕн общество̆ллă хуçалăхне тĕреклетес тĕлĕшпе палăрмаллах ÿсĕмсем тунă. Общество̆ллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пур йышши выльăхсем енĕпе те срокчен тата иртерсе тултарнă. Иртнĕ çулта кашни гектартан вăтам шутпа 100-шер пăта яхăн ыраш, 117-шер пăт урпа пухса кĕртнĕ. Уйрăм бригадăсен тырпул тухăçлăхĕ тата пысăкрах. 2-мĕш бригада членĕсем 181 гектар çинчен кашни гектартан вăтам шутпа 114-шар пăт ыраш, 100-шер пăт сĕлĕ илнĕ. 3-мĕш бригада гектар пуçне 153-шер пăт сĕлĕ пухса кĕртнĕ.

Колхозниксем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Вĕсем производство планне тунă чухне партипе правительство Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсене тĕпе хурса, артелĕн пĕтĕм [illegible] тĕрĕс шута илсе, тырпул тухăçлăхне ÿстерес, колхозăн общество̆ллă хуçалăхне малалла аталантарас ĕçсене иртнĕ çулхинчен чылай пысăкрах обязательство илнĕ.

Вăйлă тырпулшăн çу кунĕсенче кăна мар, хĕлле те тимлĕ ĕçлемелле. Колхозра çакна лайăх ăнса тытаççĕ. Пур çĕрте те хĕрÿллĕ ĕç пырать. Вăрлăх хунă амбарсем патĕнче мотор кĕрленĕ шав илтĕнет. Колхозниксем вăрлăхлăх тырра электричество вăйĕпе ĕçлекен сортировкăпа тасатаççĕ.

Ялхуçалăх артелĕ чи лайăх сортлă тырăсем акать. Кăçал та пĕтĕм вăрлăха Çĕрпÿри селекци станцийĕнчен улăштарса илнĕ. Ăна колхозра тепĕр хут сортласа тасатнă. Ку ĕçе «ВИМ-2» сортировкăпа электричествăпа ĕçлемелле тунă нумай çăмăллатнă. Колхоз кашни çулах чылай тухăçлă «Горский» сорт пăрçа акать. Акмалли пăрçана кăçал икĕ хутчен тасатнă.

Иртнĕ çулта 15 гектар çинчен кашни гектартан вăтам шутпа 10-шар центнер кантăр вăрри пухса кĕртнĕ. Государствăна кантăр вăрри парса колхоз 52 пин тенкĕ укçа тупăш сатăр. Çу чылай илнĕ. Кăçал кантăр акмалли çĕр лаптăкне 25 процент чухлĕ пысăклатма палăртнă. Кантăр вăрри çуракиччен аксса кĕлларма çитмелĕклĕ, ăна та лайăх тасатса хунă.

Курăк вăррисем те кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ. Кăçал колхоз ун акмалли плана кăтартниччĕ пуçне улăксене 70 гектар курăксем акать. Ку вăл çарансене лайăхлатма, утă тухăçлăхне ÿстерме май парать.

Суракинче акма хатĕрленĕ вăрлăхсене лабораторире тĕрĕслеттернĕ. Вăрлăх таса, шăта пулнине палăртнă. Вăрлăхсене халăхра мĕнле тытса усрани правлени членĕсем, колхоз агрономĕ тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ.

— Хире тислĕк илсе кăларсан кăларсан анбарта тырă нумайрах пулĕ,—тет Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕллĕ тăракан Ленин орденлĕ колхоз председателĕ С. Коротков юлташ. Çав сăмахсене «Новая жизнь» колхоз членĕсем хăйсен опычĕпе те лайăх кураççĕ. Шĕкĕр уй-хире илсе кăларнă тислĕк чухлĕ нумай ĕçре кăларас тырă кăларнă. 1951 çулта 1946 çулхине танлаштарсан, пĕлĕм çĕр лаптăкĕнчен икĕ хута яхăн ытларах тĕшшырă пухса кĕртнĕ.

Кăçал уй-хире 21 пин лав, плана кăтартниччен ытларах тислĕк кăларма палăртнă. Халĕ тислĕк турттарас тĕлĕшпе куллен 25 лав пĕр трактор ĕçлет. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз «Новая жизнь» колхозпа пĕрлешиччен уя тислĕк кăларассине хакламан. Выльăх витисенче темиçе çул хушши çĕрсе выртнă тислĕк нумай пуханнă. Çав паха удобрение кăçал çĕрулми, пахча çимĕç лартмалли, кок-сагыз акмалли вырăнсене кăларма тытăннă. Унсăр пуçне хире йăлăрма колхозниксем хăйсен килĕнчи тислĕке параççĕ. Уй-хире кăларнă тислĕке пысăк купасене, лайăх пусарса купалаççĕ. Бригадăсенче кĕлĕ, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ те пухса хатĕрлеççĕ.

Юлашки çулсенче ялхуçалăх артелĕ тăпрана çĕнетес ĕçре минераллă удобренисемпе анлă усă курма тытăннă. Çитес çуркунне 400 гектара яхăн ыраш калчине апат пама йышăннă. Çурри акмалли пĕтĕм çĕр лаптăкне те минераллă удобренисемпе çемçетмелле. Çĕрулми лартмалли вырăна кашни гектар пуçне 6-шар центнер, кантăр акмалли пусса—8-шар центнер тĕрлĕ минераллă удобренисем сапма палăртнă. Колхоз кăçал минераллă удобренисем 600 тонна туяннă. Паянхи кун тĕлне 500 тонна яхăн кÿрсе килнĕ. Минераллă удобренисене турттарма МТС пулăшать. Колхоз ятарласа трактортан кăкармалли çуна туса хатĕрленĕ. Çуна çине 7 тонна минераллă удобрени е 5 тонна тислĕк тиеме пулать. В Кузин тракторист пĕр вăхăтрах икĕ ĕç тăвать. Вăл çул майĕн, станцине минераллă удобрени патне кайнă чухне, колхозăн чи аякри уйне тислĕк турттарса каять. Кунне икĕ рейс туса 14 тонна минераллă удобрени кÿрсе килет тата хире 30 лав чухлĕ тислĕк кăларать.

Колхозра уй-хир ĕçĕсен пысăк пайне тракторсемпе тумалла. Кунта çулсеренех уйрăм трактор бригади ĕçлет. Суракинче çавăн пекех лашасемпе те чылай ĕçсем тума палăртнă. Колхоз правленийĕ лашасене йăлсă хĕл касарассишĕн, вĕсене суракине вăйлă кăларассишĕн хытă тăрăшать. Лашасене хĕллехи вăхăтра çитерме, суракн иртерме апат çителĕклĕ уйăрнă. Халĕ лашасене тураса вĕтетнĕ улăма вĕри шывпа çемçетсе, çăнăх сапса параççĕ. Выльăх апатне типтерлĕ тытаççĕ.

Суракн тата ытти ялхуçалăх ĕçĕсен вăйсăлăхĕ лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх машинисемпе хатĕрсене вăхăтра тата лайăх юсаса çитерессинчен те нумай килет. Плугсене, сÿресене, сеялкăсене икĕ тимĕрçĕ лаççинче юсаççĕ. А. Демахина В. Шиципов тимĕрçĕсем машинăсем юсамалли кулленхи задачисене яланах иртерсе тултараççĕ. Январĕн 20-мĕшĕ тĕлне 54 плугран 40-не, 15 сеялкăран 10-не, 100 сÿререн çуррине ытла, 6 молотилка тата ытти машинăсем те чылай юсаса хатĕрленĕ. Тимĕрçĕсем ялхуçалăх машинисене çак уйăхра юсаса пĕтерме сăмах панă. Лаша хатĕрĕсем, урапа таврашĕсем те пурте юсавлă пулаççĕ.

Колхоз ĕçченĕсем, тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе партипе правительство лартнă задачăсене аса тытса, кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 150-шар пăт тĕшшырă туса илме обязательство йышăнчĕç.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн пуçарнă кĕрешÿ вăйланса пырать. Ял ĕçченĕсем хĕллехи вăхăтра тумалли агротехникăллă ĕçсене лайăх пурнăçлассишĕн, суракине пур енчен те тĕплĕ хатĕрленсе çитессишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ.

А. АЛЕКСАНДРОВ.
(Хамăр корр.).

Çĕрпÿ районĕ.

Макарон фабрикинче

Шупашкарти макарон фабрикине 1951 çулхи виççĕмĕш кварталта тунă çитĕнÿсемшĕн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Фабрика коллективĕ çĕнтерÿ ялавне çирĕп тытать. Коллектив 1951 çулхи производство планне 121 процент тултарчĕ. Ĕç тухăçлăхне ÿстернĕ, продукцин хăйне ларакан хакне чылай чакарнă, планран иртерсе 46 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ.

Çав вăхăтрах фабрика чи пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан предприятисен ретне тăма тивĕçлĕ пулчĕ.

Фабрикăри рабочисем пурте ĕç нормине иртерсе тултараççĕ. Рабочисемпе работницăсем пĕри тепринчен аванрах, пултаруллăрах ĕçлеме тăрăшаççĕ. Чи лайăх стахановецсем Т. [illegible], М. Тарасова, Л. Швед, А. Яковлева, В. Лукоянова, А. Денисова, Ф. Кольцанова, М. Борисова, Н. Малова тата ытти те нормăна 160—170 процент тултараççĕ.

Фабрика коллективĕ производствăна пур енĕпе те кăтартуллă туса çитерессишĕн большевикла кĕрешет. Тухăçлă ĕçленипе пĕрлех пахалăхшăн тата ĕç вырăнĕнчи тасалăхшăн кĕрешесси кулленхи çирĕп йĕркене кĕнĕ. Фабрика пысăк пахалăхлă темиçе тĕслĕ макаронсем туса кăларма тытăнни ĕççыннисене савăнтарать.

Иртнĕ çулти çитĕнÿсем рабочисене кăçалхи çул татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Январь уйăхĕн малтанхи кунĕнчен пуçласах вĕсем тата пысăкрах çитĕнÿсемшĕн кĕрешме тытăнчĕç. Малтанхи 10 кун хушшинче 50 тонна вырăнне 55,5 тонна макарон туса кăларнă. Фабрика çак вăхăтри ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхĕ енчен союзра чи малти вырăна йышăнма тивĕçлĕ пулнă. Çавăн пекех иккĕмĕшпе виççĕмĕш вунăкунлăхсенчи плана та нумай иртерсе тултарнă.

Çитĕнÿсем, паллах ĕнтĕ, хăй тĕллĕн пулакан япала мар. Кунта производствăра малта пыракансен опычĕсене анлă сараççĕ. Стахановка М. Тарасова юлташ ертсе пыракан бригада чи пысăк пахалăхпа ĕçлекен бригада пулса тăрать. Профсоюз организацийĕ пуçарнипе çак бригадăн опытне вĕренессине организациленĕ. Тарасова бригади сехет графикĕ тăрăх ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Бригада опычĕпе фабрикăри рабочисене пурне те тĕплĕ паллаштарнă. Фабрикăри пур бригадăсем те сехет графикĕпе ĕçлеме тытăнаççĕ.

Фабрика çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Çитес вăхăтра кунта «ГМП-1» йышши çĕнĕрен иккĕмĕш преса ĕçе яраççĕ. Сушильнăй цеха çĕнетсе лайăхлатнă. Государство фабрикăна пысăклатма 200 пин тенкĕ панă.

В. АНДРЕЕВ.

Вулакансем библиотека ĕçĕсем çинчен сÿтсе яваççĕ

Çак кунсенче республикăри М. Горький ячĕпе тăракан Центральнăй библиотека вулакансем умĕнче хăйĕн иртнĕ çулхи ĕçĕсем çинчен отчет туса пачĕ.

Максим Горький ячĕпе тăракан библиотекăна кунне 500 çын вулама çÿрет, вĕсем 700 кĕнекерен кая мар илсе вулаççĕ. Пĕлтĕр библиотекăна çÿрекенсен хисепĕ татах та нумай ÿснĕ, çĕнĕрен 8.209 çын вулама çÿреме çырăннă, вĕсем 189.921 кĕнеке илсе вуланă.

Библиотекăран вулама илекен кĕнекесен тематики çитех те нумай енлĕ. Марксизм-ленинизм произведенийĕсене çулталăк хушшинче 13.670 кĕнеке, çутçанталăкпа наука ыйтăвĕсем тăрăх 16.789 кĕнеке, техника ыйтăвĕсем тăрăх 11.557, ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх 4.611 кĕнеке, илемлĕ литература произведенийĕсем 60 пин том ытла илсе вуланă.

Ĕççыннисем хушшинче коммунизмăн аслă стройкисем, мир çинчен çырнă кĕнекесене, чăваш писателĕсен произведенийĕсене ытларах пропагандăлас тĕлĕшпе вулакансен конференцийĕсем, литература вечерĕсем тăтăшах иртерНĕ.

Çавăн пек паха ĕçсене библиотекăра кăна мар, предприятисемпе учрежденисенче те иртернĕ.

Библиотекăран тĕрлĕ ыйтусем тăрăх кĕнекесем ыйтаççĕ, хăшпĕр кĕнекесем кунти библиотека фондĕнче çук. Апла пулин те библиотека работникĕсем вулакансен ыйтăвне тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Вĕсем çав кĕнекесене Мускаври, Ленинградри е урăх хуласенчи пысăк библиотекăсенчен çырăнса илсе вулама параççĕ. Пĕлтĕр 102 çынна 850 кĕнеке çырăнса илсе панă.

М. Горький ячĕпе тăракан библиотека районсенчи библиотекăсен ĕçне лайăх йĕркелеме пулăшать, унта ĕçлекен работниксене методика пулăшăвĕ парать. Çавăнпа библиотека работникĕсем районсенче час-часах пулаççĕ, илсенчи библиотекăсенче ĕçлекенсемпе семинарсем иртереççĕ, вĕсен квалификацине ÿстерме пулăшаççĕ.

Библиотека хăйĕн пĕтĕм ĕçне общество̆ллă организацисемпе, учрежденисемпе, писательсемпе тачă çыхăнса туса пырать.

Доклад хыççăн пренире вулакансем чылай тухса каларĕç. Чăваш АССР Сутăç министерствин инспекторĕ Матежева юлташ, энергомеханически техникум преподавателĕ Старостин юлташ, Дальянов юлташ тата ыттисем те библиотека ĕçĕнчи лайăх енсемпе пĕрлех хăшпĕр çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç.

„ЯЛТИ ВРАЧ" *КИНО*

Республикăри кинотеатрсенче халĕ кăтартма пуçланă «Ялти врач» киноповесть ялти больницăра ĕçлекен медицина работникĕсен пархатарлă ĕçĕ çинчен, вĕсем çын сывлăхне упраса пурăнассишĕн тата унăн пурнăçне вăрăмлатассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа парать.

...«Степная» станци тĕлĕнче пассажирски поезд чарăнать. Кăпăшка юрпа витĕннĕ ансăр перрон çине яштака пÿ-силлĕ хĕр анса юлать. Хăйĕн чемоданĕсем умĕнче чарăнса тăнă вăхăтра вăл станци çывăхĕнчи тавралăха хăвăрт тинкерсе илет. Унăн пичĕ çинче хавасăх шевли çав тери кăмăллăн ялтăраса тăрать. Çакă вăл поезд çинчен тин кăна аннă хĕр хăйĕн малашнехи пурнăçĕпе ĕçĕнче кирек мĕнле йывăрлăха хăюллăн çĕнтерме хатĕррине кăтартса парать.

Кино куракансем фильмри героиньăпа Татьяна Николаевна Казаковăпа питĕ ăшă кăмăллăн паллашаççĕ. Театр залĕнче ларакан кашни çын, медицина институтĕнчен тин кăна вĕренсе тухнă çамрăк врачăн çĕнĕ вырăнти чи пирвайхи кунĕсем мĕнле иртнине курса, хăйĕн пурнăçĕнчи паллă кунсене аса илет. Фильмра пирĕн вăхăтри простой çынсен ĕçĕпе кунçулне тĕрĕс кăтартса панă.

«Ялти врач» фильмра пирĕн Тăван çĕршывăн инçетри районĕнчи пĕр пĕчĕк ялти больницăн хальхи вăхăтри кулленхи ĕçне кăтартса панă. Çак фильма ÿкерсе хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçленĕ артистсемпе режиссерсен ĕçĕнчи чи паллă ăнăçлăх вăл—совет çыннисен чĕрери патриотизмне тата ялти пĕчĕк больницăсен пысăк ĕçĕсене чăннипех ĕнентерÿллĕ уçса кăтартма пултарни пулать.

Фильмра кăтартса панă «истори» пĕртте кăткăс мар. Медицина институтĕнчен тин кăна вĕренсе тухнă пĕр çамрăк врач Татьяна Казакова, хăй вăхăтĕнче Аслă Отечественнăй вăрçă фронтĕнче тăшмана хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçнăскер, Тăван çĕршывăн чи инçетри районĕсенчен пĕринче ĕçлеме пырать. Районти сывлăх пайĕ ăна Горячие ключи ятлă ялти больницăна ĕçлеме ярать. Çав вăхăтра вăл больницăна çынсем пурте юратакан тата хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен ватă врач Арсений Иванович Арсеньев ертсе пынă.

Казакова пыриччен унта Темкин ятлă тепĕр врач пулнă, вăл хăйĕн ĕçне питĕ çиелтен туса пынă. Çавăнпа ăна Арсеньев врач, пĕр больницăра кăна 50 çул ĕçлекенскер, чĕререн хисеплесе юратма пултарайман. Казакова çинчен вăл малтан Темкин çинчен шухăшланă пекех шухăшлать. Сĕнĕрен пынă çамрăк врача вăл хăй çав больницăра 50 çул хушшинче тунă ĕçсемпе паллаштарать. Пÿлĕмсемпе палатăсенче йăлтăртатса тăракан стенасемпе урайсем, ешерсе ÿсекен курăксем тата кашни çын куçне куранакан çирĕп йĕркелĕх—çаксем пурте ватă врача чĕререн савăнтараççĕ. Çак ырă ĕçсемшĕн вăл хăйне çамрăк врач тав туса мухтассине кĕтет. Анчах Казакова ватă врачăн пархатарлă ĕçне хăй пысăка хурса хаклани çинчен тÿрех уççăн палăртма ĕлкĕреймест. Вăл пачах урăхла: больницăра çынсен сывлăхне тĕрĕслеме ятарласа тунă лабораторипе рентген çуккишĕн тата унта халиччен те водопровод кĕртменнишĕн тĕлĕнет. Çакăншăн ватă врач хытă пăшăрханать.

Паллах, вĕсем иккĕшĕ те питĕ тĕрĕс. Кино куракансем вĕсене иккĕшне тĕрĕс ăнланаççĕ. Ватă врач хăй ĕмĕрĕнче халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе питĕ нумай ĕç тунă. вăл халĕ те чĕререн тăрăшса ĕçлет. Çавăнпа вăл хăйĕн ĕçне ыттисем тĕрĕс хакламан пĕлнине курасшăн. Медицина ĕçĕн практикине тин çеç тытăнакан врач та хăй умне пысăк требованисем лартать, чирлĕ çынсене сыватмалли условисем кашни больницăрах çителĕклĕ пулмалла, тесе шутлать.

Казакова хăйĕн фойк сулĕ çинче чылай йывăрлăхсемпе тĕл пулать. Пĕр енчен вăл çамрăк, тепĕр енчен тата врач профессийĕ уя умне çĕнĕрен çĕнĕ задачăсем кăларса тăратать: унăн больницăра медицина пулăшăвĕ ыйтма пыракан çынсен чирĕсене тĕплĕн палăртма пĕлмелле, çынсем хушшинче пысăк авторитетлă пулмалла, çынсен сывлăхĕпе пурнăçне чăннипех сыхлаоа хăварма пултаракан тĕрĕс решенисем йышăнмалла.

Амбулаторине пирвайхи кун ĕçлеме пырсанах, Арсений Иванович ăна, Темкин врачпа пĕр пек шутласа, кăмăллă мар сăмахсем калать. Ватă врач кабинетран çилленесе тухса кайсан, Казакова хăйне ватă врач ăнланманнишĕн кÿренсе макăрать.

Çак вăхăтра çак икĕ врач хушшине виççĕмĕш вăй—больницăра ĕçлекенсен коллективĕ хутшăнать. Стерильнăй инструментсем хумалли сĕтел умĕнче тăракан сестрасем, ватă врачпа çамрăк врач хушшинчи хутшăнусем çивĕчленсе кайнине курса, шăппăн пăшăлтатса калаçаççĕ. Мĕн тумалла-ши ĕнтĕ? Правила килписене чăрмалле-ши, çук-и? Мĕн тусан лайăх пулать-ши?.. Сестрасенчен пĕри, Казакова патне хуллен утса пырса, ăна стерильнăй салфетка (таса марлĕ татăкĕ) парать. Çакă вăл, паллах, «Хисеплĕ врач, куççулĕре шăлса типĕтĕр!» тенине çеç мар, «Ан куланăр! Эпир сире халех пулăшма хатĕр! Больницăри пурнăç вĕçĕх лайăх йĕркеленсе кайĕ», тенине те питĕ уççăн кăтартса парать.

Чăн та, вăхăт нумай та иртмест, ватă врачпа çамрăк врач пĕр-пĕрне питĕ лайăх ăнланса çитеççĕ. Мĕншĕн тесен, вĕсем иккĕшĕ те хăйсен ĕçне чĕререн юратаççĕ, иккĕшĕ те пĕр чăнлăхшăн—çын сывлăхне чысăн сыхлассишĕн тата унăн пурнăçне вăрăмлатассишĕн кĕрешеççĕ.

Арсений Иванович, хăйĕн ĕмĕрĕнче сахал мар хура-шурă курса тÿснĕскер. Казаковăна та халăх ĕçĕшĕн хăй пек тăрăшса ĕçлеме вĕрентет: ăна хăй ĕлĕк, Октябрьти революциччен, мĕнле ĕçлени çинчен, аслă революципе граждан вăрçи çулĕсенче тата ялхуçалăхне коллективизацилнĕ вăхăтра халăх ĕçне хăй мĕнле хутшăнса ĕçлени çинчен, аслă çул малалла пушкăр пулнă вырăнта илемлĕ больница мĕнле туса лартни çинчен каласа парать. Хăй нумай вăхăт хушши йывăр чирлесе пурăнать пулин те, Казаковăна вăл куллен ырă та ăслă канашсемпе пулăшса парать.

Арсений Ивановичăн сывлăхĕ хуташсăн хавшаса пырать. Юлашкинчен вăра больницăра пĕтĕм ĕç çамрăк врач çине тиенет. Анчах вăл ĕçри йывăрлăхсенчен шиклĕнсе тăмасть. Больницăра ĕçлекенсен коллективĕ ĕçре хăйне чăтăмлă пулăшса пынипе пула вăл пур ĕçе те вăхăтра та ăнăçлă туса пырать.

Акă, колхоз агрономĕ сасартăк чирлесе ÿкет. Операци тума кăна унăн пурнăçне хăрушă вилĕм аллинчен туртса илме пулать... Анчах Казакова çакăн пек кăткăс операцие хăйĕн ĕмĕрĕнче пикран та хăй тĕллĕн туса курман. Кунсăр пуçне тата Казаковăпа агроном атаь чирлĕ çын çеç мар. Агрономпа врач иккĕшĕ те пĕр-пĕрне юратаççĕ. Урăрн сасартăк ÿкнĕ агронома районти больницăна ярас,—унăн пурнăçĕ ĕмĕрлĕхех татăлма пултарать. Тăхтаса тăма май та çук. Çак çамрăк çын пурнăçне мĕнле сăлса хăварасси çинчен Арсений Ивановичран та ыйтса пĕлме май çук. Унăн та сывлăхĕ çав тери хавшаса çитнĕ. Казакова умне питĕ йывăр ыйту тухса тăрать: мĕн тумалла?

...Пĕрремĕш операци. Экран çинче питне куçĕсем тăрăн марлĕпе витнĕ çамрăк врач тăрать. Ун умĕнчи сĕтел çинче агроном выртать. Врач шанчăклăн ĕçлет. Кашни секунда хаклă. Вăл хăрушă вилĕме хирĕç кĕрешет... Унăн çамкисем çинĕ пăрçа пек шултăра тар пĕрчисем сиксе тухаççĕ... Вăл, агроном пурнăçне сыхласа хăварать.

Арсений Иванович пурнăçне те Казакова хăрушă вилĕм аллинчен хăюллăн туртса илет.

Казакова чирлĕ çынсене сыватнипе çеç лăпланса лармасть. Вăл—совет медицинин чи активлă работникĕ. Ăна эпир колхоз ятнĕ çинче те, парти райкомĕн бюровĕ ларăвĕнче те тĕл пулатпăр. Казакова—колхозри парторганизаци чи активлă членĕсенчен пĕри, вăл—ялти совет интеллигенцийĕн чи лайăх представителĕ.

Кайран вăл Арсений Иванович пурнăçне хураллать, ăна халăх сывлăхне сыхлас ĕçре 50 çул хушшинче тунă паха ĕçсен опытне пĕтĕçтерме—научнăй ĕç çырса пĕтерме пулăшать. Çав вăхăтрах вăл хăй ĕçлекен больницăна çĕнĕрен юсаса лайăхлатас тĕлĕшпе тимлĕн тăрăшса ĕçлет: больницăна водопровод кĕртет, водолечебница тăвать.

...Мускавра ялти врачсен Пĕтĕм Союзри съезчĕ пуçланать. Съезда кайма Арсений Иванович, хăйĕн нумай çулхи опычĕсене пĕтĕçтерсе, ятарласа научнăй ĕç çырнă пулнă. Анчах, хăйĕн сывлăхĕ начар пирки, вăл çав съезда каймасть. Хăй вырăнне Казаковăна кайма хушать.

Мускав. Пысăк зал. Трибуна çинче Казакова тăрать. Вăл ватă врачăн пархатарлă ĕçĕсем çинчен тата хăй мĕнле ĕçлени çинчен чĕререн хавхаланса каласа парать. Съездра ларакан çамрăксем Казакова каланă çулăмлă сăмахсенче совет çамрăкĕсен ÿсĕмне кураççĕ, хăйсене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панишĕн аслă Сталина чунтан-чĕререн тав тăваççĕ.

Чăн та, фильмра тĕп геройсен рольне вылякан артистсем пирĕн вăхăтри çынсен сăнарне çав тери хумханмалла кăтартса панă. Экран çине пăхсан, Арсеньевпа Казакова—вĕсем эпир тахçантан сывăх палласа пурăнакан кÿршĕ çыннисем пек, ялан пĕрле ĕçлесе пурăннă çынсем пек туйăнаççĕ.

«Ялти врач» киноповесть—совет кинематографи работникĕсем юлашки вăхăтра тунă пысăк ăнăçлăх. Вăл—коммунизм тăвас ĕçре ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен совет çыннисен хастарлăхĕ çинчен каласа пани пулать.

М. ЮРЬЕВ.

Маршал Чойбалсан ӳтне Мускав юлашки çула ăсатни

Пирӗн çӗршыв ӗçҫынннисем Монголи халăхӗпе пӗрле Монголи халăхӗн мухтавлă ывăлне, Монголин демократиллӗ халăх государствине тăвас тӗлӗшпе ывăнма пӗлмесӗр ӗçленӗ, Совет Союзӗн шанчăклă тусӗ маршал Чойбалсан вилнӗ пирки хытă хурланать. Маршал Чойбалсанăн ӳтне хунă тупăка Союзсен çурчӗн Колоннăллă залне лартнă. Тупăк умӗнчен Совет столицинчи çӗр пин çын ытла—предприятисенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем, министерствăсен работникӗсем, наука, литература тата искусство деятелӗсем, шкулсенчи студентсемпе преподавательсем, Совет Çарӗпе Тинӗс-Çар Флочӗн воинӗсем иртнӗ.

Совет Союзӗнчи халăхсем маршал Чойбалсана лайăх пӗлнӗ, ăна юратнă. Чойбалсан юлташ халăх революцийӗн ӗçне, хăйсен çӗршывне чечеклентерес ӗçе, ӗçҫынннисен телейӗшӗн, миршӗн, демократипе социализмшăн кӗрешме хăйӗн пӗтӗм пурнăçне панă. Вăл совет халăхӗн шанчăклă тусӗ пулнă. Çак тусăх совет халăхӗн Аслă Отечественнăй вăрçă кунӗсенче, нимӗçсен фашистла захватчикӗсене хирӗç кӗрешнӗ кунсенче уйрăмах лайăх тата вăйлă палăрнă.

Чойбалсан юлташăн ӳчӗпе уйрăлмалли юлашки сехетсенче Колоннăллă зала çӗнӗ чечек кăшăлӗсем нумай илсе пынă. Вӗсем хушшинче—Совет хӗрарăмӗсен фашизма хирӗç кӗрешекен комитечӗн, ССР Союзӗн Тинӗс-Çар министерствин, Çул-йӗр министерстви коллегийӗн, литературăпа искусство енӗпе памалли Сталинла премисен комитечӗн, Мускав государство университечӗн, ВЛКСМ Мускав комитечӗпе Мускав хула комитечӗн, Сталин ячӗпе тăракан автозавод коллективӗн, Совет писателӗсен тата ыттисен чечек кăшăлӗсем.

...Январӗн 29-мӗшӗнчи ирхи 7 сехет. Залра хурлăхлă кӗвӗсем янăрассӗ. Кунта министрсем, СССР Верховнăй Совечӗпе РСФСР Верховнăй Совет депутачӗсем, столицăри партипе совет активӗ пухăннă.

Тупăк умӗнче—СССР Верховнăй Совет Президиумӗн председателӗн заместителӗ М. П. Тарасов, СССР Верховнăй Совет Президиумӗн секретарӗ А. Ф. Горкин, СССР Ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗн заместителӗсем А. А. Громыкăпа А. Е. Богомолов, Совет Союзӗн маршалӗ С. М. Буденный, ӗçҫынни депутачӗсен Мускав хула Совет исполкомӗн председателӗ М. А. Яснов.

Тупăк патӗнче Монголи Халăх Республикин премьер-министрӗн заместителӗ Шарап, Монголи Халăх Республикин ССР Союзӗнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй послӗ Идамжаб, посольство сотрудникӗсем, маршал Чойбалсанăн тăванӗсемпе çывăх çыннисем тăрассӗ.

Хурлăхлă кӗвӗсен сассипе маршал Чойбалсан ӳтне хунă тупăка Колоннăллă залран майӗпен çӗклесе тухассӗ. Траурлă процесси Театральнăй проездпа, Киров урамӗпе Ярославски вокзал патнелле майӗпен пырать. Унта Мускаври мӗнпур 25 районти ӗçҫынннисен представителӗсем пухăннă.

Вокзал умӗнчи вырăна прожекторсем çап-çутă çутатса тăрассӗ. Çав вырăна йӗри-тавралла çар çыннисенчен хисеплӗ хурал тăратнă. Совет Союзӗн тата Монголи Халăх Республикин хура хăюпа йӗри-тавралла çавăрнă государство ялавӗсене усна.

Хурлăхлă марш кӗввисен сассипе процесси специальнăй поезд патнелле пырать. Малта чечек кăшăлӗсем йăтса пырассӗ. Тупăк хыçӗнчен маршал Чойбалсанăн тăванӗсем, Монголи Халăх Республикин премьер-министрӗн заместителӗ Шарап, Монголи Халăх Республикин послӗ Идамжаб, МНР посольствин членӗсем, СССР Правительство членӗсем, министрсем, СССР Верховнăй Совечӗпе РСФСР Верховнăй Совечӗн депутачӗсем утассӗ.

Монголи халăхӗн чаплă çулпуçне тата Совет Союзӗн шанчăклă тусне юлашки çула ăсатса яма ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗн заместителӗ Н. А. Булганин, ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗн заместителӗ В. А. Малышев, СССР Ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ А. Я. Вышинский, ССР Союзӗн Çар министрӗ, Совет Союзӗн Маршалӗ А. М. Василевский, Çул-йӗр министрӗ Б. П. Бещев, ССР Союзӗн Тулашри суту-илӳ министрӗ П. Н. Кумыкин, СССР Сывлăх министрӗн заместителӗ А. Н. Шабанов, Совет Союзӗн Маршалӗ В. Д. Соколовский, Совет Союзӗн Маршалӗ Л. А. Говоров, П. А. Артемьев генерал-полковник, Ф. Ф. Кузнецов генерал-полковник, Мускаври посольствăсемпе миссисен чылайăшӗн пуçлăхӗсемпе сотрудникӗсем пынă.

Маршал Чойбалсан ӳтне хунă тупăка майӗпен вагона кӗртсе лартассӗ. Постамент тавра ВКП(б) Центральнăй Комитечӗн, ССР Верховнăй Совет Президиумӗн, СССР Министрӗсен Совечӗн тата ыттисен чечек кăшăлӗсене хурассӗ.

Уйрăлмалли юлашки минутсем çывхарса çитессӗ. Ирхи сакăр сехет çитет. Траур поезчӗ майӗпен инçетри çула кайма тухать. Ăсатма пынă çынсем пурте хурланни вӗсен сăн-пичӗсенче палăрать.

Совет Союзӗнчи халăхсем Монголи халăхӗн питӗ паллă çулпуçне, пирӗн аслă Тăван çӗршывăн шанчăклă тусне Чойбалсан юлташа ӗмӗр-ӗмӗрех хисеплесе асра тытӗç.

Траур поезчӗпе Улан-Батор хулине—Монголи Халăх Республикин столицине маршал Чойбалсан ӳтне пытарнă çӗрте пулма СССР Правительствин делегацийӗ кайнă. Делегаци составӗнче СССР Верховнăй Совет Президиумӗн Председателӗн заместителӗ М. П. Тарасов, Совет Союзӗн Маршалӗ С. М. Буденный, ӗçҫынни депутачӗсен Мускав хула Совет исполкомӗн секретарӗ П. П. Леонов, Бурят-Монгол АССР Министрӗсен Совечӗн председателӗ Д. П. Пыремпилов, СССР Ют çӗршыв ӗçӗсен министерствин ответлă работникӗ Ю. К. Приходов.

Правительство делегацийӗн составне тата ССР Союзӗн Монголи Халăх Республикинчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй послӗ Г. И. Иванников кӗрет. Вăл хальхи вăхăтра Улан-Баторта пурăнать.

Çав поездпах Монголи Халăх Республикин премьер-министр заместителӗ Шарап, Монголи Халăх Республикин ССР Союзӗнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй послӗ Идамжаб, маршал Чойбалсанăн тăванӗсемпе çывăх çыннисем тухса кайнă. (ТАСС).

Корейăри ӗççем

ХАЛĂХ ÇАРӖН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январӗн 29-мӗшӗ (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халăх Республикин Халăх çарӗн главнăй командованийӗ паян çапла пӗлтерӗ:

Халăх çарӗн соединенийӗсем Китай халăх добровольцӗсен чаçӗсемпе пӗрле пур фронтсенче те тăшмана хирӗç оборонăра тăрса çапăçассӗ, тăшмана тăтăшах çапа-çапа аркатассӗ.

Ӗнер Халăх çарӗн соединенийӗсем Хӗвелтухăçӗнчи фронтăн пур участокӗсенче те тупăсемпе вăйлă персе хытă çапăçнă.

Вăтаçӗртипе хӗвеланăçӗнчи фронтсенче Халăх çарӗн соединенийӗсем чылай участоксенче тăшмана хирӗç ăнăçлă çапăçнă.

Халăх çарӗн хӗвеланăçӗнчи çыранра çапăçакан чаçӗсем тăшманăн пӗр эсминецне шыва путарнă, ку эсминец унччен алсем çине тупăсемпе пеме хăтланнă пулнă.

ПХЕНЬЯН, январӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халăх Республикин Халăх çарӗн главнăй командованийӗ паян çапла пӗлтерӗ: Демократиллӗ Корея Халăх Республикин Халăх çарӗн соединенийӗсем Китай халăх добровольцӗсен чаçӗсемпе пӗрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчӗсене тата Ли Сын Ман çарӗсене хирӗç оборонăра тăрса çапăçассӗ, тăшман салтакӗсемпе офицерӗсене тата техникине чылай пӗтерессӗ.

Хӗвеланăçӗнчипе вăтаçӗрти фронтсен чылай участокӗсенче тăшман Халăх çарӗн позицийӗсене тытса илес шутпа хытă тапăнса, танксем пулăшнипе, атакăсем тунă. Анчах тăшмана каллех хăваласа янă, [illegible].

Хӗвелтухăçӗнчи фронтра Халăх çарӗн чаçӗсем тăшмана хирӗç вăйлă çапăçнă.

Паян Халăх çарӗн [illegible] чаçӗсем тата самолетсене хирӗç çапăçакан салтакӗсем тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернӗ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пӗрле, [illegible] районӗсене тапăннă пулнă.

Империалистсен Кăнтăр-Хӗвелтухăç Азири киревсӗр ӗçӗсем

ПАРИЖ, январӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). «Юманите» хаçат çапла пӗлтерет: Франци министрӗ Летурно Хаиной хулине (Индо-Китай) пырса çитнӗ. Ӗнер вăл Францин Индо-Китайри верховнăй комиссарӗн ӗçӗсене вăхăтлăха туса пыракан [illegible] генералпа тата Францин Индо-Китайри хӗçпăшаллă вăйӗсен главнокомандующийӗпе Салан генералпа калаçнă. Вӗсем хушшинче Китай Халăх Республикине хирӗç агрессиллӗ ӗçсем тумалли плансем пирки сăмах пынă.

«Юманите» хаçат çапла çырать: Летурно генералсене Марсельрен Индо-Китая 2.160 салтак, офицер илсе çитнӗ, вӗсене «Сакутун» ятлă пăрахут çине тиесе çитни пӗлтернӗ.

Тунисри ӗççем

ПАРИЖ, январӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Парижра ирхине тухнă хаçатсем Тунисри ӗççем çинчен хыпарсем пичетленӗ.

«Юманите» хаçат Франци çарӗсем, полици тата жандармери Тунис халăхне хирӗçле ӗççем туни, халăха хӗсӗрлени çинчен пӗлтерет. Бон сăмсалăхӗн районӗнче тата тинӗс çыранӗ тăрăхӗнче хуласемпе ялсене «шанчăксăр çынсенчен» тасатма тытăннă. Франци танкӗсем мирлӗ халăх пурăнакан çуртсене аркатассӗ. Тунис хулинче пур çуртсене те тата пур çынсене те ухтарассӗ, «шанчăксăр çынсене» арестлессӗ.

«Комба» хаçат пӗлтернӗ тăрăх, хуласемпе ялсене «шанчăксăр çынсенчен» тасатма пехота чаçӗсене, парашютистсен отрячӗсене, моторизованнăй полици тата танксемпе самолетсем янă. «Либерасьон» хаçат полиципе жандармери вашни ялтах çынсене арестлени çинчен çырать. Çӗршыври нумай хуласемпе портсенче вăрçă чухнехи пек йӗрке туса хунă.

Анчах, темӗн тӗрлӗ хытă хӗсӗрлесен те, Тунис халăхӗ Франци çарӗсене хирӗç кӗрешме чарăнмасть. «Юманите» хаçат ӗнер Габес, Гулетт тата ытти хуласенче Францин колониллӗ пусмăрне хирӗç протестлесе пысăк демонстрацисем пулса иртни çинчен çырать.

ПАРИЖ, январӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер каçхине тухнă хаçатсем çакăн çинчен пӗлтерессӗ: Тунис халăхӗн ирӗклӗхӗшӗн пыракан кӗрешӗве пусарас шутпа Франци полицийӗ, жандармерийӗ тата çар чаçӗсем унти халăха хытă хӗсӗрлессӗ.

«Се суар» хаçат Бон сăмсалăхӗнчи карательнăй экспедицие çӳрекен çар чаçӗсем, парашютистсем, «республика хăрушсăрлăхӗн отрячӗсем» тенкелскерсем, танксем, самолетсем тата ытти çынсем те хутшăнни çинчен пӗлтерет. Тунис халăхӗ хушшинче нумай çынсене вӗлернӗ тата амантнă. Франци асăннă сăмсалăх çинчи çарӗсем каçхине 7 сехетрен пуçласа ирхине 7 сехетчен мӗнле те пулин хулара е яла кам та пулин урама тухсан, çав çынна никăйăн асăрхаттарса[illegible] персе пăрахма приказ илнӗ. Франци çар влаçӗсем ирӗн [illegible] сăмсалăх районне пырса кӗме чарнă, унта никама та ямассӗ.

«Се суар» хаçат тата ӗнер Марсельтен Тунисра тăвасса карап тухса кайни, çав карапсем çине çӗнӗ çар чаçӗсемпе хӗçпăшал тиени çинчен пӗлтерет.

ПАРИЖ, январӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Ирхине тухнă хаçатсем пичетленӗ хыпарсенчен çакă курăнать: Тунисра хару-тăру халӗ те пӗтмен чухлӗ те лайăхланман. Реакционерсен хаçачӗсем Тунисра халăх «пăлханма чарăнни» çинчен нумай çырнă пулин те, Франци правительстви Тунисра çӗнӗ çар чаçӗсем ярать.

«Юманите» хаçат пӗлтернӗ тăрăх, Францин Бон сăмсалăхӗ районӗнчи çарӗсем мирлӗ халăха хытă хӗсӗрлеме тытăнассӗ. Ку района «операцилле ӗçсен зони» тесе пӗлтернӗ.

Франци колонизаторӗсем Тунис халăхне хӗсӗрлес тата ăна хирӗç террорла ӗçсем тăвас политикăна пурнăçласа пыни Франци халăхне хытă тарăхтарать. Франци халăхӗ колонизаторсен çав политикине хирӗç протестлет.

«Юманите» хаçат правительствăран Тунисри халăха хӗсӗрлесе [illegible] чарса лартма тата Тунисра никама пăхăнманлăх пама ыйтакан çӗнӗ организацисен списокне пичетленӗ, Пор-Сен-Луи Дю-Рон портӗнче (Буш-дю-Ром департаменчӗ) ӗçлекенсем Çурçӗр Африкăна илсе каймалли çар материалӗсене карапсем çине тиеме килӗшмессӗ Тунис халăхне хӗсӗрлесе юн тăкнине хирӗç тата унта çӗнӗ çар чаçӗсем янине хирӗç протестленӗ ятпа ӗнер «Рено» заводӗнчи 400 рабочи ӗçлеме пăрахнă.

«Комба» хаçат пӗлтернӗ тăрăх, хальхи вăхăтра Тунисра парашютистсем тата «республика хăрушсăрлăхӗн отрячӗсем» тенкелскерсен салтакӗсем пӗтӗмпе 8 пин çын шутланассӗ.

• • •

ПАРИЖ, январӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Каçхине тухнă хаçатсем пӗлтернӗ тăрăх, Франци çарӗсем Тунисра çӗршыва «шанчăксăр çынсенчен» тасатас ӗçе малалла туса пырассӗ. «Франс суар» хаçат çав ӗçе çӗршывăн нумай районӗсенче туса пыни çинчен пӗлтерет.

«Се суар» хаçат пӗлтернӗ тăрăх, паян ирхине Бизерта районӗнче халăха хирӗç «пысăк операцисем» пуçарнă. Кун пек «операцисене» Тебульба, Корба, Мокнин, Бени-Кхалед, Келиби районӗсенче тата Бон сăмсалăхӗнче туса пырассӗ. Çав хуласемпе районсем çинче самолетсем аялтан вӗçсе çӳресе, халăх çине темиçе хутчен те пулеметсемпе пенӗ. Тунисри мирлӗ халăха хирӗç çапăçнă çӗре тинӗс-çар флочӗ те хутшăннă. Тинӗс-çар карапӗсем тип çӗр çинчи çар чаçӗсемпе авиаци тинӗс çинчен пулăшассӗ.

«Се суар» хаçат çакна палăртать: Франци колонизаторӗсем Тунис халăхне хытă хӗсӗрлессӗ пулин те, Тунисри патриотсем хăйсен çӗршывӗн нимпе никама пăхăнманлăхӗшӗн çаплах паттăррăн кӗрешессӗ. Ӗнер Гулетт тата Маретх хулисенче халăх пысăк демонстрацисем ирттернӗ. Сфакс хулинчи ӗçҫынннисем паян забастовка тума йышăннă. Тунисри патриотсем Калаа-Кебира хули патӗнче чугун çул линине аркатни çинчен, Сфакс хулипе Кайруан хули хушшинчи телефон çыхăнăвне татни çинчен пӗлтерессӗ.

Франс пресс агентстви çакăн çинчен пӗлтернӗ: Пӗтӗм Тунисри ӗçҫынннисен союзӗ, Пӗтӗм Тунисри çӗр ӗçлекенсен союзӗ, Пӗтӗм Тунисри алăстаçӗсемпе вакă сутăçсен союзӗ паян мӗнпур ӗçҫынннисене февралӗн 1-мӗшӗнче пӗтӗмӗшле забастовка ирттерме чӗнсе çыру янă. Агентство пӗлтернӗ тăрăх, çак профсоюз организацийӗсен официальнăй пӗлтерӗвӗнче Франци колонизаторӗсем халăха хӗсӗрленине хирӗç тата çав ӗçре хӗçпăшаллă вăйсемпе усă курнине хирӗç протестленӗ ятпа пӗтӗмӗшле забастовка ирттермелли çинчен каланă. Пӗлтерӳре тата февралӗн 1-мӗшӗнче арабсен пур çӗршывӗсенче те «Тунис кунне» ирттересси çинчен аса илтернӗ. Çакăнтан арабсен çӗршывӗсенче Тунис ӗçҫынннисем хăйсен нацине никама пăхăнманлăхӗшӗн паттăр кӗрешнине ырлани курăнать.

«Монд» хаçат пӗлтернӗ тăрăх, паян ирхине Францин Тунисри генеральнăй резидентӗ Викон де Откло Тунис бейне Франци правительствин нотине панă. Çав нотăра Фор правительстви Тунис бейне Пӗрлешнӗ нацисен организацине панă жалобăна каялла илме, «халăх пăлтавӗсене» чарса лартма тата Тунис министрӗсене Парижран каялла чӗнсе илме хушнă, тесе шутлассӗ хаçатсем.

Америка самолечӗсем Кэсонри çар кӗме юраман вырăнти йӗркесене çаплах пăсассӗ

ПЕКИН, январӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран çапла пӗлтерет: Америка самолечӗсем Кэсонри çар кӗме юраман района тата конференци ирттермелли вырăна çаплах вӗçе-вӗçе пырассӗ. Кэсон çар кӗме юраман район пулмалли çинчен тунă килӗшӗве пăсассӗ. Америка самолечӗсем январӗн 25-мӗшӗпе 27-мӗшӗ хушшинче—виçӗ кун хушшинче—çав территори çине 17 хутчен вӗçсе кӗнӗ.

Январӗн 28-мӗшӗнче Корейăпа Китай çарӗсен командованийӗн çыхăну офицерӗ Пай Чен-вэнь полковник Америка çарӗн çыхăну офицерӗ Мэррей ушне Америка çарӗн командованийӗ килӗшӗве темиçе хутчен те пăсни çине тимлӗ пăхмалла тесе требовани лартнă. Вăл Америка самолечӗсем килӗшӗве пăсни çинчен, мӗнле йышши самолетсем, хăçан, хăш вырăна тата миçе самолет вӗçсе кӗни тата вӗсем ăçталла вӗçсе кайни çинчен Мэррея тӗплӗ пӗлтернӗ. Икӗ енӗн представителӗсем пӗрле тӗрӗслени хыççăн çакă палăрнă: пӗр хутӗнче асăннă килӗшӗве Америка çар самолечӗсем январӗн 25-мӗшӗнче 10 сехет те 10 минутра Паньмыньчжоньри конференци ирттермелли вырăн тӗлӗнчен вӗçсе иртнипе пăснă.

Мэррей каллех çуя сăлтавсем каларса тăратнипе ответ тыгăссинчен пăрăнма хăтланнă. Анчах Пай Чен-вэнь полковник килӗшӗвӗн кашни пунктне çирӗппӗн пурнăçласа пыма кирли çинчен тата килӗшӗве пурнăçлас ӗç çине ответсăрла пăхни киревсӗр ӗççем пуласси тата пысăк хирӗçӳсем тухасси патне илсе пыма пултарни çинчен хытă каланă.

Малалла вăл Америка самолечӗсем Кэсонри çар кӗме юраман вырăнти йӗркесене виçӗ кун хушшинче хăçан тата мӗнле пăсни çинчен каласа панă.

Египетри лару-тăру пирки

НЬЮ-ЙОРК, январӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Америкăри хаçатсем Египетра юлашки вăхăтра пулса иртекен ӗççем çинчен нумай çырассӗ. Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчӗ Гонсалес США государство департаменчӗн представителӗсенчен илнӗ çакăн пек хыпара пӗлтерет: Америкăн Египетри послӗ Кеффери юлашки кунсенче Египет представителӗсемпе «канашлас» ӗçе «питӗ активлă» туса пынă.

Америкăри хаçатсем пӗлтернинчен çакă курăнать: Вашингтон представителӗ «канаш панă чухне» Нахас-паша правительствине вырăнтан кăларас тӗлӗшпе усăпах хытă хӗснӗ.

Хаçатсем пӗлтернӗ тăрăх, Нахас-паша правительстви вырăнтан тухиччен пӗр кун малтан, январӗн 26-мӗшӗнче Америка послӗ Кеффери Египет королӗ патне пынă, ăна Египетри «йӗркесӗрлӗхсене» пӗтересси çинчен çырнă меморандум панă. «Уолл-стрит джорнэл» хаçат пӗлтернӗ тăрăх, Америка послӗ çавăн чухне «Пӗрлешӳллӗ Штатсем хальхинче шӳтлеме шутламассӗ», тенӗ.

Государство департаменчӗн официальнăй çыннисем Нахас-паша вырăнне Али Махер-пашана уйăрса лартма кирлӗ тесе тӳрремӗнех калани çинчен хаçатсем пӗлтерессӗ.

Потребительсен обществисемпе райпотребсоюзсен отчечӗсем

Потребкоопераци организацийӗсенче çуталăкри отчетсем пуçланчӗç.

Ялпо, райпотребсоюз правленийӗсем тата ревизи комиссийӗсем пайщиксен участокӗсенчи тата уполномоченнăйӗсен пухăвӗсенче иртнӗ çулхи ӗççем çинчен, пайщиксен наказӗсене мӗнле пурнăçлани çинчен отчет туса парассӗ. Çав вăхăтрах пайщиксен пухăвӗсенче магазин, лавкка, чайнăй заведующийӗсем, лавккапа столовăй комиссийӗсем хăйсен ӗçӗсем çинчен каласа парассӗ.

Потребительсен кооперацийӗ вăл—общественнăй организаци. Хăйсен вăйӗпе, хăйсен укçи-тенкипе ялта суту-илӳ организацине пӗрлешнӗ членсем кооператив хуçисем пулса тăрассӗ. Правленисемпе ревизи комиссийӗсен ӗçне сӳтсе явма тата вӗсене çӗнӗ наказсем пама çӗршер пин член хутшăнать.

Республикăри потребительсен кооперацийӗ иртнӗ çул ялти кооперацие организацине хуçалăх енчен çирӗплетес тӗлӗшпе, халăх валли товар çителӗклӗ тăратас тӗлӗшпе пысăк ӗççем туса ирттерчӗ.

Пӗчӗк ялпосем пӗрлешсе пысăк ялпосем пулса тăчӗç. Ялпосемпе райпотребсоюзсем нумайăшӗ илемлӗ, хулари пек пысăк магазинсем лартрӗç, вӗсем халӗ колхозлă ялсемпе район центрӗсене илем кӳрсе тăрассӗ.

Советски районӗн центрӗнче пысăк магазин тунă, чайнăй уçнă. Етӗрне районӗнче хуçалăх таварӗсем сутакан магазин уçнă. Улатăр районӗнчи Ямской Посад ялӗнче пысăк магазин туса лартнă. Елчӗк районӗнче чайнăй уçнă. Ялти нумай магазинсене, чайнăйсене, культмагсене, столовăйсене, лавккасене юсаса çӗнетнӗ.

Потребительсен кооперацийӗ ваккăн суту-илӳ енӗпе товар çаврăнăш планне тултарайнăрӗ пулин те, иртнӗ çул халăха 1950 çулхинчен 11 процент ытларах товар сутнă. Цир-авăр, çӗленӗ тумтир, атă-пушмак, велосипедсем, мотоциклсем, строительство материалӗсем, автомашинăсем сутасси чылай ӳснӗ.

Потребительсен обществисене иртсе пыракансен хăйсен докладчӗсенче суту-илӳ предприятийӗсем ваккăн товар сутмалли плана мӗнле тултарни çинчен, лайăх ӗçлекен магазинсем çинчен, начар ӗçлекенсен çитменлӗхӗсем çинчен, 1951 çулта мӗнле расходсем пулни тата мӗнле тупăшсем илни çинчен каласа памалла.

Потребкоопераци организацийӗсенче совет суту-илӗвӗн йӗркине пăсни те, кулленхи кирлӗ таварсене çителӗклӗ тăратманни те час-часах тӗл пулать-ха. «Правда» хаçат «Таварсем мӗншӗн илекенсем патне çитмессӗ» ятлă статьяра пирӗн республикăри суту-илӳ организацийӗсен ӗçӗнчи пысăк çитменлӗхсене палăртса панă.

Потребкооперацин суту-илӳ предприятийӗсенче час-часах чи кирлӗ япаласем—кашăк, çӗвӗ çӗлемелли çип, тура, шăл порошокӗ, савăт-сапа, тăвар, краççын, шăрпăк пулмассӗ. Çак таварсем Чăваш-потребсоюз базисенче те, райпотребсоюз склачӗсенче те çителӗклӗх. Анчах илекенсем патне вӗсене вăхăтра çитерейместӗ. Çакăн пек çитменлӗхсем çинчен пайщиксене каласа памалла. Уйрăм руководительсемпе магазин заведующийӗсен начар ӗçне палăртса, ӗçҫынннисен шанчăкне пурнăçа кӗртмен руководительсене хытă критикăламалла. Ялпосемпе райпотребсоюзсем нумайăшӗ кăçал январь уйăхӗнче товар çаврăнăш планне тултарас тӗлӗшпе çителӗксӗр ӗçлерӗç.

Уполномоченнăйсен пухăвӗсенче кооператива организацине хуçалăх енчен малалла çирӗплетсе пыма наказсем памалла. Партипе правительство потребкооперацин ӗçне лайăхлатассишӗн кулленех тăрăшасçӗ. Кăçал республикăри потребкооперацин организацийӗсен çӗнӗрен 7 магазин тумалла, хуçалăх таварӗсем сутас районсенче 7 магазин-склад, 4 пысăк база тумалла.

Уполномоченнăйсен пухăвӗсенче правленисемпе ревизи комиссийӗсен унне суту-илӳ ӗçне лайăхлатас, халăха тата колхозсене кулленех кирлӗ таварсене çителӗклӗ сутса тăрас тӗлӗшпе çӗнӗ наказсем тăратмалла.

Уполномоченнăйсен пухăвӗн тупăшсемпе расходсен сметине, хуçалăх ӗçӗсен планне çирӗплетмелле. Расходсемпе тупăшсен кашни статьине тӗплӗ пăхса тухмалла, укçа-тенке перевеллес тӗлӗшпе пур резервсене те шута илмелле. 1951 çулхи тупăшра валеçес ыйтăва пăхса тухмалла. Ялпо уставӗ тăрăх, тупăш тăрăх илекен налога тӳлесе татнă хыççăн, тупăша пай укçи тӳлекен членсене, уполномоченнăйсен пухăвӗнче çирӗплетнӗ хисепе кура, 20 процент таран валеç çине начислени туса валеçсе памалла. Ача площадкисем, яслисем, хӗрлӗ кӗтессем тума тата ялпо членӗсем хушшинче ытти культурăллă ӗççене туса ирттерме памалла.

Иртнӗ çул малта пыракан ялпосем хывнă пай çине начислени туса пай укçи тӳлекенсене чылай укçа-тенкӗ пачӗç. Кăçал пур ялпосем те пай укçи тӳлекенсене начислени шучӗпе укça пама пултарассӗ.

Отчет кампанийӗ потребкоопераци организацийӗсен ӗçне пăхса тухать. Çакă ĕнтӗ кооператив организацийӗсен мӗнпур ӗçне лайăхлатма, хуçалăх ӗçӗсен планне тултарма тата ирттерсе тултарма, кооператив организацийӗсене укçа-тенкӗ енчен çирӗплетме, пай укçи тӳлес ӗçе вăйлатма тата çӗнӗ членсене кооперацие хутшăнтарма май парать. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, потребкоопераци ӗçӗнче çӗнӗ çитӗнӳсем тумалла.

Е. НИКОЛАЕВ.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумӗ Федор Тимофеевич Семенов юлташа Чăваш АССР Министрӗсен Совечӗн Председатель заместителӗн ӗçӗнчен хăтарнă.

Пӗлтерни

Паян, февралӗн 1-мӗшӗнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечӗн парткабинетӗнче «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» пӗрремӗш çул вӗренмелли кружоксен руководителӗсем валли: «Марксистла философиллӗ материализмăн тӗп паллисем» тема тăрăх семинар пулать. Руководитель А. Ф. Сютруков юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧӖ.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли виççӗмӗш государственнăй заем

7-мӗш выляра тухнă выигрышсем

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1952 çулхи январӗн 20-мӗшӗнче Кострома хулинче пулса иртнӗ.

Заемăн мӗнпур 226 разрядӗнчи çак серисемпе облигацисен номерӗсем выляса илнӗ:

Çери №№	Облигаци №№	Миçе тенкӗ	Çери №№	Облигаци №№	Миçе тенкӗ
040024	25*)	1.000	050634	1—50	200
040589	08*)	1.000	050693	15*)	1.000
040615	02*)	1.000	050880	40*)	5.000
040660	46*)	1.000	050883	14*)	1.000
040706	1—50	200	050972	1—50	500
040746	1—50	500	051059	1—50	200
040754	40*)	1.000	051080	1—50	200
040794	41*)	50.000	051312	33*)	1.000
041159	05*)	1.000	051353	1—50	200
041447	1—50	500	051376	1—50	500
041587	1—50	500	051565	1—50	200
041631	02*)	1.000	051600	1—50	200
141718	43*)	10.000	051694	42*)	1.000
041734	04*)	1.000	051705	1—50	200
041738	18*)	1.000	051862	06*)	1.000
041833	45*)	1.000	052028	45*)	1.000
041841	09*)	1.000	052070	10*)	1.000
041877	39*)	1.000	052135	1—50	200
042317	27*)	25.000	052147	1—50	200
042373	42*)	1.000	052167	44*)	1.000
042402	40*)	1.000	052320	1—50	500
042450	1—50	500	052324	1—50	200
042662	30*)	1.000	052433	42*)	1.000
042953	46*)	1.000	052573	1—50	500
043099	36*)	1.000	052621	1—50	200
043117	1—50	500	053137	1—50	200
043141	1—50	500	053245	1—50	200
043270	1—50	500	053289	28*)	1.000
043402	1—50	200	053375	1—25	200
043522	1—50	200	053407	27*)	1.000
043560	10*)	1.000	053552	28*)	1.000
043703	31*)	1.000	053692	36*)	1.000
043763	1—50	500	053773	13*)	1.000
043842	14*)	1.000	054194	41*)	1.000
043889	05*)	1.000	054237	48*)	1.000
043945	1—50	500	054352	1—50	200
044191	38*)	1.000	054464	32*)	10.000
044315	49*)	1.000	054575	21*)	1.000
044501	09*)	5.000	054751	39*)	1.000
044639	1—50	200	054761	20*)	1.000
044737	02*)	1.000	054968	24*)	1.000
044751	07*)	1.000	055279	49*)	1.000
045042	49*)	1.000	055337	1—50	500
045206	1—50	500	055342	1—50	200
045286	35*)	1.000	055357	50*)	1.000
045703	22*)	1.000	055692	16*)	10.000
045725	10*)	1.000	055828	21*)	1.000
045962	34*)	5.000	055837	29*)	1.000
046115	48*)	1.000	056057	1—50	200
046277	27*)	1.000	056072	19*)	1.000
046367	15*)	1.000	056266	09*)	10.000
046467	1—50	200	056512	02*)	10.000
046530	05*)	5.000	056573	17*)	1.000
046605	1—50	200	056657	1—50	200
046633	48*)	1.000	056715	50*)	1.000
046703	46*)	1.000	056855	23*)	1.000
046740	1—50	200	056921	1—50	200
046845	26*)	1.000	056963	33*)	1.000
046888	24*)	1.000	057112	24*)	1.000
046909	43*)	25.000	057144	10*)	1.000
047106	35*)	1.000	057388	1—50	200
047112	1—50	200	057430	13*)	1.000
047304	49*)	1.000	057656	46*)	1.000
047569	02*)	1.000	057904	20*)	1.000
047597	22*)	5.000	057962	41*)	5.000
047647	39*)	1.000	057996	15*)	1.000
047837	37*)	5.000	058009	1—50	500
048220	06*)	1.000	058119	30*)	1.000
048510	09*)	1.000	058131	29*)	1.000
048583	15*)	1.000	058222	03*)	1.000
048733	38*)	1.000	058327	18*)	1.000
048744	09*)	1.000	058412	18*)	5.000
048983	1—50	500	058602	48*)	1.000
049098	1—50	500	058697	1—50	500
049166	1—50	500	058794	05*)	1.000
049333	02*)	1.000	059049	18*)	1.000
049491	21*)	5.000	059154	31*)	1.000
049614	14)*	1.000	059234	10*)	1.000
049766	1—50	200	059259	04*)	1.000
049880	19*)	1.000	059358	1—50	200
049967	36*)	1.000	059408	15*)	1.000
049986	20*)	1.000	059420	1—50	200
050171	13*)	1.000	059620	13*)	1.000
050416	1—50	200	059806	1—50	200
050429	09*)	1.000	059829	1—50	200
050485	05*)	1.000	059931	1—50	200
050502	46*)	5.000			

*) Çак серие кӗрекен облигацисен ытти 49 номерӗ 200-шер тенкӗ выляса илнӗ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕН УПРАВЛЕНИЙӖ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ

Паян, февралӗн 1-мӗшӗнче, вырăсла спектакль «ЖЕНИТЬБА»

Часах чăвашла спектакль «ЮЛИУС ФУЧИК»

Спектакльсем каçхине 8 сехетре пуçланассӗ.

ГЛАВКИНОПРОКАТĂН ЧĂВАШ КАНТУРӖ

çак кунсенче республикăри пур кинотеатрсенче те

Польшăра туса хатӗрленӗ çӗнӗ илемлӗ фильм

„Ночной взрыв"

кăтартма пуçлать

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителӗ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнăç пайӗ—4-17, ял хуçалăх пайӗ—3-97, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, çырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ [illegible] Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.